ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Август 16 ВЫРСАРНИКУН № 160 (9069)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тырпула хăвăрт тата тăкаксăр пухса кĕртесси, государствăна срокчен тырă парса татасси — кашни колхозăн чыслă тивĕçĕ (1 стр.).
Тăван çĕршывра (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Н. Смирнов.—Учительсене политикăлла воспитани парассине лайăхлатассишĕн; Н. Никитин.—Паянхи шухăш-кăмăл. Заводри калаçусем (2 стр.).
А. Малышев.—Суту-илĕве малалла вăйлатса пырар (2 стр.).
В. Данилов.—Строительство ĕçĕсене хăвăртлатар (2 стр.).
Т. Кружилин.—Вăрлăхлăх акнă нумай çул ӳсекен курăксене лайăх пухса кĕртер (3 стр.).
ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ЕРЧЕТЕС ĔÇРЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕМ. С. Федотов.—Енесенчен сĕт ытларах суса илер (3 стр.).
ХАÇАТСЕМ ÇИНЧЕН ВУЛАКАНСЕМ МĔН КАЛАÇÇĔ. И. Кузьмин.—Редакци авторсемпе ĕçлемест (3 стр.).
Н. Захаров.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Францири ĕçсыннисем парламентăн чрезвычайнăй сессине пухма ыйтаççĕ (4 стр.).
Иранри забастовка (4 стр.).

Учительсен августри канашлăвĕсем умĕн

Тепĕр вунă кунтан республикăри хуласемпе районсенчи пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче ĕçлекен учительсен канашлăвĕсем пулса иртмелле. Çак канашлусенче учительсем иртнĕ вĕренӳ çулĕн итогĕсене тишкерсе тухаççĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче тăракан задачăсене тата вĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене тĕплĕн палăртаççĕ.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе хавхаланса, иртнĕ вĕренӳ çулĕнче нумай учительсем вĕренекенсене тарăн та тĕплĕ пĕлӳсем парассишĕн, çав пĕлӳсемпе пурнăçра усă курма вĕрентессишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. Республикăри шкулсенче политехникăлла вĕренĕве пурнăçлас тĕлĕшпе те пирвайхи утăм тунă. Анчах вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче çаплах пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Çав çитменлĕхсене çине тăрса пĕтересси, совет шкулне тата çӳлерех пусăма хăпартасси çутĕç органĕсемпе учительсен пăллă задачи пулса тăрать.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе умра тăракан тĕп задачăсене пăхса тухасси учительсен августри канашлăвĕсен тĕп тĕллевĕ пулать. Партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче халăха вĕрентес ĕç енĕпе питех те паллă задачăсем кăларса тăратрĕ. Пиллĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле республикăсен столицисенче, республикăсене пăхăнса тăракан хуласенче, область, край центрĕсенче тата пысăк промышленноçлă центрсенче çичĕ çул вĕрентес ĕçрен пурне те вăтам пĕлӳ памалла тăвас ĕçе куçма палăртнă. Çав хушăрах ытти хуласемпе ялсенче те çитес пилĕкçуллăхра вăтам пĕлӳ памалла тума (вунă çул вĕрентме) кирлĕ условисем хатĕрлесе çитерме палăртнă.

Паллах ĕнтĕ, çак ответлă задачăна пурнăçа кĕртес ыйтусем учительсен канашлăвĕсен ĕçĕсенче паллă вырăн йышăнса тăмалла. Халлĕхе республикăри чылай шкулсемпе ял Совечĕсем шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те çичĕ çул вĕрентес ĕçе çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ-ха. Нумай ялсенче çулсеренех шкула явăçтарман ачасем юлса пыраççĕ тата вĕренӳ çулĕн тăршшинче чылай ачасем вĕренме пăрахаççĕ. Сăмахран, Первомайски районĕнчи шкулсенче иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 87 ача пĕр сăлтавсăрах вĕренме пăрахнă. Вĕренӳ çулĕ тăршшинче вĕренме пăрахнă ачасен хисепĕ Улатăр, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче йышлă. Çитес вĕренӳ çулĕнче шкул çулне çитнисене пурне те вĕренĕве явăçтарасси, вĕренӳ çулĕ тăршшинче ачасем вĕренме пăрахассине пĕтересси кашни шкулăн, кашни учителĕн тивĕçĕ пулса тăрать.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче республикăри уйрăм шкулсемпе учительсем çине тăрса ĕçлемен пирки тата хăшпĕр учительсен квалификацийĕ çителĕксĕр пулнă пирки, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулчĕç. Чылай шкулсем вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен, пĕр класрах икĕ çул ларакансен хисепне татăклăнах чакарас задачăна пурнăçлаймарĕç. Ĕлкĕрсе пырайманнисен тата пĕр класрах икĕ çул ларакан ачасен хисепĕ халĕ те пысăк-ха. Сăмахран, Советски районĕнчи Мăн Чӳрашри вăтам шкулта (шкул директорĕ Г. Сергеев юлташ) вĕренекенсенчен 37 проценчĕ ĕлкĕрсе пырайман. Калинино районĕнчи Юманайри вăтам шкулта (шкул директорĕ Н. Дмитриев юлташ) вĕренекенсенчен 34 проценчĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймаи. Учительсен канашлăвĕсенче, лайăх ĕçлекен шкулсемпе учительсен паха опычĕпе анлăн паллаштарнипе пĕрлех, кая юлса пыракан шкулсемпе учительсен ĕçне тĕплĕн тишкерсе тухмалла, вĕсем кая юлса пынин сăлтавĕсене уçăмлăн палăртмалла, юлса пынине пĕтерме мĕн тумаллине кăтартса памалла.

Республикăри чылай шкулсенче вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхине тата математикăна вĕрентес ĕçре уйрăмах пысăк çитменлĕхсем пур. Çак çитменлĕхсене пĕтермелли майсене, вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçре И. В. Сталинăн «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă гениллĕ ĕçĕнче панă кăтартусене пурнăçласа пырас задачăсене канашлусенче тĕплĕн сӳтсе явмалла.

Учительсен августри канашлăвĕсенче политехникăлла вĕрентĕве пурнăçлас ыйтусем паллă вырăн йышăнса тăмалла. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче чылай шкулсем политехникăлла вĕрентӳн майĕсене тĕпчесе палăртас енĕпе ĕçлерĕç. Учительсем шкулсенче вĕренекенсемпе тĕрлĕ практикăлла ĕçсем ытларах туса иртерме тытăнчĕç, промышленность предприятийĕсенче, машина-трактор станцийĕсенче, колхоз производствинче пулса, вĕсенчи ĕç йĕркисемпе паллашасси лайăхланчĕ, техникăлла кружоксен пахалăхĕ ӳсрĕ. Çапах та пĕрлех политехникăлла вĕрентĕве пурнăçлас ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар. Нумай шкулсенче программăра кăтартса панă практикăлла ĕçсенчен чылайăшне иртермеççĕ, экскурсисенче сайра хутра анчах пулаççĕ, вĕсен пахалăхĕ те çителĕксĕр. Хăшпĕр шкулсенче сăнавлă ĕçсем тумалли участоксене организацилемен тата сăнав участокĕсем пур çĕрте те вĕсемпе вĕрентӳре çителĕклĕ усă курмаççĕ.

Учительсен канашлăвĕсенче уйрăм шкулсен политехникăлла вĕрентӳ ĕçĕнчи паха пуçарăвĕпе пур учительсене те паллаштармалла, çак ĕçри халлĕхе палăрса тăракан çитменлĕхсене пĕтермелли майсене тĕплĕн сӳтсе явмалла.

Шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхне хăпартас ĕçре комсомол тата пионер организацийĕсен ĕçне лайăхлатса пыни паллă вырăн йышăнса тăрать. Анчах шкулсенчи комсомол тата пионер организацийĕсем вĕренӳ пахалăхĕшĕн тата çирĕп дисциплинăшăн çителĕксĕр кĕрешеççĕ-ха, комсомолецсем хушшинче те вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем пур. Уйрăм шкул директорĕсемпе учительсем комсомол тата пионер организацийĕсене ĕçре сахал пулăшаççĕ, ВЛКСМ райкомĕсенчен хăшĕ-пĕрисем шкулсенчи комсомол тата пионер ĕçне тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Çак çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерни кирлĕ.

Шкулта вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн ăнăçăвĕ нимрен малтан учительтен, унăн квалификацийĕнчен, политикăлла пĕлĕвĕ пысăк пулнинчен килет. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче учительсен квалификацине, вĕсен теорипе методика пĕлĕвĕсене, идейăпа политикăлла шайне ӳстерес ыйтусем канашлусенче тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăмалла.

Çав канашлусем пуçланиччен вăхăт нумай юлмарĕ. Çутĕç министерствин, хуласенчи тата районсенчи çутĕç пайĕсен канашлусене иртерме хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене çак кунсенчех вĕçлесе çитерес пулать. Иртнĕ çулсенче учительсен августри канашлăвĕсен секцийĕсен ĕçĕсенче пысăк çитменлĕхсем пулнă. Уйрăм районсенче секцисен ĕçне васкавлăн иртернĕ, умра тăракан ыйтусене çиелтен кăна сӳтсе явнă. Кăçал секцисен ĕçне аслă шкулсенчи преподавательсене, çавăн пекех инженерсене, агрономсене, промышленноçри тата ялхуçалăхĕнчи малта пыракансене хутшăнтармалла. Кашни хулара тата районта учительсен канашлăвĕ уçăлнă тĕле педагогика выставкине уçмалла, унта малта пыракан учительсен паха ĕçне анлăн кăтартмалла.

Çутĕç органĕсен учительсен канашлăвĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен лайăх тата критикăпа самокритикăна анлăн сарса, ĕçлĕхлĕ иртермелле. Çак ĕçре çутĕç пайĕсене партин хула комитечĕсемпе райкомĕсен тивĕçлĕ пулăшу памалла.

★

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

М. Ф. Шкирятов юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

М. Ф. Шкирятов юлташ çуралнăранпа 70 çул тултарнă май тата вăл Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Совет государстви умĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунине палăртса, Матвей Федорович Шкирятов юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи августăн 14-мĕшĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмаха пичетлесе кăларнă

Политикăлла литература кăларакан государство издательстви СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмаха уйрăм кĕнеке туса кăларнă.

Кĕнеке тиражĕ 5 миллион экземпляр. (ТАСС).

Тырпула хăвăрт тата тăкаксăр пухса кĕртесси, государствăна срокчен тырă парса татасси—кашни колхозăн чыслă тивĕçĕ

Государствăна—тырă

ИШЛЕЙ. Районти ялхуçалăх ĕçченĕсем, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсемпе тата сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмахпа хавхаланса, ялхуçалăх çулĕнчи мĕнпур ĕçсене кăтартуллă вĕçлеме, государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе срокчен пурнăçлама çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

«Большевик», «Сталинская гвардия», Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Знамя труда» колхозсен членĕсем лайăх пуçару турĕç. Вĕсем государствăна тырă памалли обязательствăна августăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç, районти мĕнпур колхозниксемпе механизаторсене чĕнсе каларĕç. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 700 центнера яхăн, «Сталинская гвардия» колхоз 800 центнер ытла тырă леçсе парса, ыраш кĕрхи тулă памалли плана тултарчĕç.

Катраç ял Советĕнчи «Знамя» колхоз августăн 13-мĕшĕнче государствăна обязательнăй йĕркепе тата МТС ĕçленĕшĕн тырă памалли задание районта чи малтан тултарчĕ. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе Маленков ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан, «Красный плуг», «Урожай», «Правда» колхозсем те лайăх ĕçлеççĕ.

В. ЧЕРНОВ.

• • •

ЭЛĔК. «Правда» колхоз çак кунсенче ыраш çапса пĕтернĕ. 17 гектар çинчи пăрçана та çулса çапнă. Халĕ колхозниксем хĕрсех тулăпа сĕлĕ выраççĕ. Ку ĕçре машинăсемпе туллин усă кураççĕ.

Колхоз государствăна тырă памалли графика куллен темиçе хут иртерсе тултарса пырать. Шофер В. Кушков Вăрнар станцине куллен виçшер рейс туса 60—70 центнер тырă леçет.

Çак кунсенче кĕрхи тырăсем акма тухрĕç. Колхоз кăçал пĕтĕм çĕр лаптăкне сортлă ыраш акса хăварать.

А. ОРЛОВ.

• • •

КАЛИНИНО. Государствăна тырă парас ĕçе лайăх йĕркеленине пула, августăн 10-мĕшĕ тĕлне «Салют» колхоз графика 115 процент тултарчĕ. Çак ĕçре малта тухнăшăн колхоз КПСС райкомĕпе райисполкомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Халĕ куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава алăра хăварассишĕн кĕрешӳ пырать.

Тырă парас ĕçе парторганизаципе правлени тĕрĕслесе, йĕркелесе пыраççĕ.

И. ИВАНОВ.

Ĕç хăвăртлăхне ӳстермелле

СĔНТĔРВĂРРИ. Районти чылай колхозсенче тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн социализмла ăмăрту саралнă. «Коммунизм» колхоз членĕсем (колхоз председателĕ Давыдов юлташ) кĕрхи тырăсене 6 кунта вырса пĕтерчĕç, халĕ хĕрсех сурт выраççĕ. Ленин ячĕпе тăракан, «Молния», «Светлый путь» тата ытти колхозсенче те уй-хир ĕçĕсем ăнăçлă пыраççĕ.

Асăннă колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçе колхозниксем пурте хутшăнаççĕ, вĕсенчен нумайăшĕ нормăна иртерсе тултарса ĕçлеççĕ. Кунта уй-хир ĕçĕсене выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсемпе штатра тăракан работниксем те активлă хутшăнаççĕ.

Анчах та тырпул пухса кĕртес ĕç районти чылай колхозсенче çителĕклĕ пулса пымасть-ха. Çак ĕç уйрăммăнах «Родина» колхозра (председателĕ Белов юлташ), Мичурин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Душкин юлташ) вăраххăн пулса пырать. Юлса пыни ĕçе начар организациленинчен, колхозсем машинăсемпе çителĕксĕр усă курнинчен килет. Нумай артельсенче машинăсемпе ĕçлессине хакла хумаççĕ.

Колхозсене МТС пысăк пулăшу памалла. Анчах Сĕнтĕрвăрринчи МТС тырпул пухса кĕртес ĕçе халĕ те тивĕçлипе тытăнман-ха. МТС-ăн «С-4» маркăллă самоходнăй комбайнсем 14, «Коммунар» комбайнсем 5. Вĕсемпе кашни кун сахалтан та 200 гектар çинчи тырра вырса çапма пулать. Комбайнсем техникăлла сăлтавсене пула час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ.

МТС-ри хăшпĕр комбайнерсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Сăмахран, С. Федоров механизатор «С-4» маркăллă комбайнпа вунă кун хушшинче 120 гектар ыраш вырса çапнă. Кун хыççăн вăл ĕç тухăçлăхне татах та хăпартнă. Халĕ Федоров юлташ куллен 15—16 гектар суртри вырать, сменăри нормăна икĕ хут иртерсе тултарать. МТС дирекцийĕн малта пыракан комбайнерсен паха опытне ытти механизаторсем хушшинче сармалла.

Тăкаксемпе кĕрешесси—питĕ кирлĕ те пысăк ĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи чылай колхозсенче çакна шута илмеççĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçре пысăк тăкаксем тăваççĕ. МТС механизаторĕ Коньков юлташ «Родина» колхоз хирĕнче çурхи тулăна питĕ çӳлтен вырнă, кунта кашни тăваткал метр çинче 25—30 пучах таран выртса юлнă. Асăннă колхозрах тата çакăн пек пысăк çитменлĕх курма пулать: комбайнпа çапнă тырра бункертан тӳрех çĕр çине тăкаççĕ, ăна вара нумай вăхăт хушши шута илмесĕр, хуралламасăр выртараççĕ, унтан вара виçмесĕрех хатĕрлев пунктне е колхоз амбарне леçеççĕ.

Районти «Красная звезда», «Первое Мая», «Молния» тата ытти колхозсенче те тырпул пухса кĕртес ĕçре тăкаксемпе кĕрешмеççĕ. Тырă вырас, кĕлтесене турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсене пĕр вăхăтра туса пыман артельсенче уйрăмах пысăк тăкаксем пулаççĕ.

Су кунĕсем иртсе пыраççĕ, кĕрхи кунсем çывхараççĕ. Ялхуçалăх çулĕ вĕçлениччен тумалли ĕçсем татах та нумай-ха. Кĕрхи тырăсене вăхăтра акмалла, хăмăл сухаламалла, выльăх-чĕрлĕхе тутă та ăшă витесенче хĕл каçарма хатĕрленмелле, часах кĕрхи çĕртме тумалла пулать т. ыт. те. Çавăнпа та тырпула хăвăрт тата тăккаламасăр пухса кĕртесси, государствăна тырă памалли плана чыслăн пурнăçласси—паян тумалли чи ответлă задачăсем. Районти органсен, чи малтанах, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн çав ĕçсене оперативлă ертсе пымалла.

Агроном М. ЯКИМОВ.

Арпа-улăма тирпейлĕ пухса хумалла

Кувакино районĕнчи «Путь Ильича» колхозра хĕрсех авăн çапаççĕ. Кунта улăма çийĕнчех купалаççĕ, арпана ятарласа тунă хуралтăсене, йĕпе-сапа тивмен çĕре пухса хураççĕ. Колхозра комбайн хыççăн юлакан улăма пухса тирпейлес ĕçе те аван йĕркеленĕ.

Асăннă районти «Красный партизан», «Новь» колхозсенче те арпа-улăма тăккаламасăр тата тирпейлĕ пухса кĕртеççĕ. Анчах та чылай артельсенче çак ĕçе хаклаймаççĕ. Сăмахран, Ленин ячĕпе тăракан колхоз хирĕнче 6 комбайн ĕçлет, вĕсемпе 910 гектар тырă вырса çапнă. Çак лаптăкри улăма вара пухса хума тытăнманпа пĕрех, 30 гектар çинче кăна пухса капана хывнă.

Ытти артельсенче те çавăн пекех. Районти колхозсен уй-хирĕсенче 4.700 гектар ытла лаптăк çинче улăм сапаланса выртать, пăсăлать. Ку вăл колхоз руководителĕсене, Кувакино тата Сурмайдан МТС директорĕсене темшĕн хумхантармасть.

Уй-хирти арпа-улăма вăхăтра пухса кĕртес тĕлĕшпе Сĕнтĕрвăрри, Чкаловски, Шăмăршă, Куславкка, Пăрачкав районĕсенче те питĕ начар ĕçлеççĕ. Комбайнсем вырса çапнă хыççăн юлнă улăма 5—10 процент çеç капана хывнă. МТС руководителĕсем çак ĕçре колхозсене тивĕçлĕ пулăшу парассишĕн тăрăшмаççĕ, тракторсенчен волокушăсем кăкарса улăм пухассине организацилемен.

Мĕншĕн улăма пухмастăр тесе ыйтсан, Шăмăршă районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан, «Путь коммунизма», «Гвардеец» тата ытти чылай колхозсен председателĕсем çапла ответлеççĕ:

— Ал çитмест, малтан тыррине çапса илесчĕ-ха, унтан улăмне пухма та вăхăт çитĕ,— теççĕ.

Çакă вăл комбайнсем ĕçленĕ çĕрте тата авăн çапнă çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилеменнине кăтартса парать.

Арпа-улăм—выльăх апачĕ, ăна типтерлĕ пухса хумалла. Кашни колхоз председателĕн çакна асра тытмалла: уй-хирте те, итем çинче те сапаланса выртакан арпа-улăм пулмалла мар.

Арпа-улăм, утă тата сĕтеклĕ апатсем хатĕрлемелли плана кашни колхозăн тултармалла.

Колхозсенчен пĕлтерессĕ

МУРКАШ. «Знамя коммунизма» колхозри Е. Зотиковпа Н. Алексеев машинистсем жнейкăпа кунсерен 7-шер гектар сурт выраççĕ. Колхоз кĕрхи тырăсем акать.

С. ТИХОНОВ.

КАЛИНИНО. МТС-ри Е. Кириллов юлташ ертсе пыракан трактор бригади «Салют» колхоза пысăк пулăшу парать. Бригада пулăшнипе артель авăн çапас ĕçе аван йĕркеленĕ, кĕске вăхăтра пăрçа çапса пĕтернĕ.

Механизаторсем комбайнпа тырă вырас, тракторсемпе кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе те хастарлă ĕçлеççĕ.

В. ВАСИЛЬЕВ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Хусан портне тунă çĕрте

ХУСАН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Хусан портне тунă çĕрте ĕçĕн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнă—тăпра чавса кăларма тытăннă.

Атăл енчен пырса кĕмелли каналтан пуçласа пулас портăн причал стенисем патне çитиччен трубасем хунă, йывăç эстакадăсем çĕклендĕ тăраççĕ. Причал пулмалли вырăнта хальхи вăхăтра хурçă юпасем çапса лартаççĕ. Пĕр уйăх хушшинче строительсем виçĕ километр çурă чухлĕ эстакада туса лартнă, пилĕк километра яхăн магистральнăй тата тăпра çуса кăлармалли пульпопроводсем хывнă.

Чи малтан аслă багермейстер Крохин юлташ ертсе пыракан «100-35» земснаряд ĕçе тытăннă. Вăл 20 пин кубометр тăпра кăларнă, нормăна иртерсе тултарнă. «300-40» йышши икĕ земснаряд тăпра кăларса дамба хывма тытăннă. Ку земснарядсен экипажĕсене Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте ĕçленĕ Коляденко тата Карягин юлташсем ертсе пыраççĕ. Çитес кунсенче тата тепĕр земснаряд ĕçлеме пуçлать. Вăл сехет хушшинче 300 кубометр тăпра кăларма пултарать.

Кăçал гидромеханизаторсем миллион çурă кубометр тăпра чавса кăларса тепĕр вырăна куçараççĕ.

Тинĕс тăрăх сулă юхтараççĕ

ХАБАРОВСК, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Генерал Панфилов» пăрахут Советская Гавань портран Камчаткăна пысăк сулă илсе кайнă. Сулăра 2 пин кубометр йывăç шутланать. Юлашки икĕ уйăх хушшинче «Дальрыбтара» управленийĕ Камчаткăпа Охотск тинĕсĕн çыранĕсенчи пулă комбиначĕсене çавăн пек 10 сулă ăсатнă.

Маго портĕнчи работниксем тинĕс тăрăх ăсатма 16 сулă туса хатĕрленĕ.

ВЦСПС-ăн XI-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен профсоюз пухăвĕсем иртересси пирки

ВЦСПС Президиумĕ Профсоюз совечĕсене сентябрĕн 10-мĕшĕччен хуласемпе районсенче профсоюз активĕн пухăвĕсене иртерме, унта ВЦСПС-ăн XI-мĕш пленумĕн решенийĕсене сӳтсе явма хушнă.

Профсоюзсен центральнăй комитечĕсен, республикăри, облаçри, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнти комитетсен сентябрĕн 15-мĕшĕччен предприятисемпе учрежденисенче рабочисемпе служащисен пухăвĕсене иртермелле. Çав пухусенче ВЦСПС-ăн XI-мĕш пленумĕн решенийĕсене сӳтсе явмалла, вĕсене пурнăçлама кирлĕ ĕçсене палăртмалла. (ТАСС).

ШАХТЕРСЕМ ВАЛЛИ—ÇĔНĔ ÇУРТСЕМ

ТБИЛИСИ, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ткварчелири тата Ткибулири шахтерсен çемйисем 80 çемье ытла çак кунсенче çĕнĕ хваттерсене куçнă.

Грузире шахтерсем валли çуллен-çул ытларах çуртсем лартаççĕ. Ткибулири, Ткварчелири тата Ахалцихри строительство управленийĕсем строительство ĕçне тумалли чи çĕнĕ механизмсемпе ĕçлеççĕ. Механизмсемпе ĕçлени çуртсене хăвăрт туса лартма май парать.

Юлашки виçĕ çул хушшинче Ткварчелире, Ткибулири Молотов ячĕпе тăракан шахтăра, Ахалцихра рабочисем пурăнакан питĕ лайăх поселоксем туса лартнă. Поселоксенче икĕ хутлă тата виçĕ хутлă çуртсем тунă. Виçĕ çул хушшинче Грузири шахтерсем валли 53 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем туса панă. Кăçал шахтерсем валли 23 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт тăваççĕ. Пурăнмалли çĕнĕ çуртсем тума 22 миллион тенке яхăн уйăрса панă.

Уйрăм рабочисем хăйсем валли çуртсем лартасси те анлăн саралнă. Ткварчелири, Ткибулири тата Ахалцихри шахтерсем 300 çын ытла юлашки пилĕк çул хушшинче хăйсем валли çуртсем лартнă. Çурт лартма рабочисене государство кивçен укçа парса пулăшнă.

Колхоз пасарĕсемпе ялти магазинсенче

ПЕТРОЗАВОДСК. Хулари колхоз пасарĕсенче апат-çимĕç нумай сутаççĕ. Петрозаводск хули çывăхĕнчи Прионежски, Пряжински тата ытти районсенчен кашни кунлех аш-какай, сĕт, хăйма, тĕварламан пулă, çăмарта нумай илсе пыраççĕ. Пасарти ларексемпе сĕтелсем çинче—çĕрулми, сухан, помидор, купăста темĕн чухлех. Колхоз пасарĕсене пахча çимĕçсемпе улма-çырла ытларах та ытларах илсе пыраççĕ.

Хула çумĕнчи хуçалăхсем хулари пасарсене апат-çимĕç таварĕсем нумайрах илсе тухма пуçланă. Хула çывăхĕнчи Зайцев ячĕпе тăракан колхоз суту-илӳ организацийĕсене 100 тонна ытла пахча çимĕçсем панă.

Пасарта апат-çимĕç хакĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, чылай йӳнелнĕ.

АШХАБАД. Чарджоу облаçĕнчи инçетри Халач районĕнче хуçалăх таварĕсем сутмалли çĕнĕ магазин уçăлнă. Ку магазинта колхозниксемпе механизаторсем строительство материалĕсем, лаша кӳлмелли хатĕрсем, сĕтел-пукан, килте тыткаламалли япаласем туянаççĕ. Юлашки вăхăтра республикăра ялти халăх валли çĕнĕрен 21 магазин уçнă.

Августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС).

Парти пурнăçĕн хроники

УФА. Каçхи партшкулсенче вĕрентекен преподавательсен, парти историне, диалектикăллă тата историллĕ материализма, политикăлла экономие вĕренмелли кружоксен руководителĕсен уйăхлăх курсĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ. Курсра 460 пропагандист вĕреннĕ.

БОБРУЙСК. Партин область, хула тата район комитечĕсен докладчикĕсем пĕр уйăх çурă хушшинче ĕçсыннисем валли «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—совет халăхĕн çул кăтартса тата ертсе пыракан вăйĕ» тема тăрăх 1.600 доклад ытла иртернĕ. Çак докладсене 185 пин çын итленĕ.

Парти обкомĕн лекторĕсем валли «СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн итогĕсем çинчен» доклад пулнă. Партин область, хула, район комитечĕсен докладчикĕсем çак тема тăрăх халăх хушшинче докладсем туса параççĕ.

Августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС).

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан цех

ЗЛАТОУСТ, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Кунти машинăсем тăвакан заводра çĕнĕ цех уçаççĕ. Ку цехра никельпе витнĕ тата сăрланă кроватьсем, шифоньерсем, кухньăра кирлĕ сĕтелсем, килте тыткаламалли ытти япаласем туса кăларма пуçлаççĕ. Цех пĕр ушкăн сĕтелсем туса кăларнă.

Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕн куллен кирлĕ япаласем туса кăларакан цехĕ те продукци нумайрах туса кăларма пуçлать. Кунта тутăхман хурçăран кашăксем, çĕçĕсем, вилкăсем туса кăлараççĕ. Столовăйра кирлĕ япаласем туса кăларас ĕçе лайăхлатаççĕ. Завод кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, куллен кирлĕ япаласем 43 процент нумайрах туса кăларать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Учительсене политикăлла воспитани парассине лайăхлатассишĕн

Совет шкулĕн çамрăк ăрăва воспитани парас тĕлĕшри пĕлтерĕшне ÿстерес задачă парти организацийĕсене шкулсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатма, вĕрентÿпе воспитани ĕçĕсем мĕнле пулса пынине тĕплĕн пĕлсе тăма хушать.

Учительсене идея тĕлĕшĕнчен воспитани панинчен, вĕсемпе куллен ĕçленинчен вĕренекенсене коммунизмла воспитани парас ĕçĕн ăнăçлăхĕ чылай килет. Партин историллĕ XIX-мĕш съездĕ хыççăн КПСС Куславкка райкомĕ шкулсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатрĕ, шкулсенчи вĕрентÿпе воспитани ĕçĕ çине тимлĕрех пăхма тытăнчĕ тата учительсем хăйсен теориллĕ пĕлĕвĕсене мĕнле ÿстернине тĕплĕрех тĕрĕслеме пуçларĕ.

Парти райкомĕ шкулсенчи вĕрентÿпе воспитани ĕçĕне тăтăшах интересленет. Иртнĕ вĕренÿ çулĕ вăхăтĕнче шкулсенчи пысăк ыйтусене нумайăшне райком бюровĕн ларăвĕсенче сÿтсе явнă. Парти райкомĕн работникĕсем, шкулсенче ытларах пулса, учительсемпе преподавательсене пулăшу параççĕ.

Пирĕн районта вăтам шкулсем 6, çичĕ çул вĕренмелли шкулсем 12 тата пуçламăш шкулсем 17. Вĕсенче пурĕ 6 пин ача ытла вĕренет. Шкулсенче 378 учитель ĕçлет, вĕсенчен 60-шĕ аслă шкулсенчен, 74 çын учительски институтсенчен, ыттисем вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă. 58 учитель хăйсен пĕлĕвĕсене педагогика институчĕсенче заочно вĕренсе ÿстерет.

Парти райкомĕ учительсене идейăлла воспитани парас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Районти вăтам шкулсемпе çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче пуринче те XIX-мĕш съезд материалĕсемпе решенийĕсене тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениалле произведенине вĕренме кружоксемпе семинарсем организациленĕччĕ. Çав кружоксемпе семинарсенче 315 учитель вĕреннĕ. Вĕсенче пуринче те занятисем йĕркеллĕ, идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра иртнĕ. Учительсем хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени итоглă занятисенче лайăх курăнчĕ.

Учительсене идейăлла воспитани пама тăрăшнă çĕрте шкулсен ĕçĕнче те çитĕнÿсем пур. Ку тĕлĕшпе Куславккари 1-мĕш номерлĕ вăтам шкула илсе кăтартма пулать. Ку шкулта пур учительсене те политикăлла вĕренĕве хутшăнтарнă. Партин XIX-мĕш съездĕн материалĕсемпе решенийĕсене вĕренмелли кружокра занятисем яланах йĕркеллĕ, идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра иртнĕ. Занятисенче учительсен активлăхĕ пысăк пулнă. Марксизм-ленинизм теорине вĕренес ĕçе учительсем шкулсем умĕнче тăракан конкретлă задачăсемпе тачă çыхăнтарса пынă. В. Якимова, И. Литовкина, И. Лившиц, А. Старохумова учительсем, вĕренÿ пайĕн заведующийĕ В. Вешенев юлташ, хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ÿстернĕ май, ĕçре ÿсĕмсем тума пултарчĕç. Учительсен коллективĕ вĕренекенсен ăшшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăну тытать, вĕсем валли учительсем политикăпа педагогика темисем тăрăх час-часах докладсем туса параççĕ. И. Лившиц юлташ, сăмахран, «И. В. Сталин социализмран майĕпен коммунизма куçма малтанлăха кирлĕ виçĕ тĕп условисинчен», «Социализмăн экономикăлла тĕп законĕ» тата В. В. Маяковский творчестви çинчен докладсем туса панă. Лившиц юлташ районти Культура çуртĕ çумĕнчи художествăллă кружок ĕçне те активлă хутшăнать. Нумай пулмасть çак примерлă учительницăна И. Лившиц юлташа КПСС членне илнĕ.

Шкулти пуçламăш парторганизаци (секретарĕ А. Ефимова юлташ) учительсене политикăлла воспитани парассишĕн куллен тăрăшать. Кружок ĕçĕсем çинчен парти пухăвĕсенче пĕр хут кăна мар сÿтсе явнă. Унтах уйрăм коммунистсемпе партире тăман учительсен отчечĕсене те итленĕ.

Тĕрлемесри, Карачри, Елчĕкри вăтам шкулсенчи, Варасăрти, Куснарти, Кĕнерти çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи учительсем те хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе чылай ĕçленине палăртас пулать.

Учительсене воспитани парас тĕлĕшпе вĕсене обществăлла ĕçе анлăн хутшăнтарни пысăк вырăн йышăнса тăрать. 335 учитель колхозсенче агитатор пулса ĕçлет, 62 учитель—парти райкомĕн штатра тăман пропагандисчĕсемпе консультанчĕсем. Педагогика ĕçне ăста пĕлекен учительсем обществăлла ĕçе те активлă хутшăнаççĕ. Çуллахи вăхăтра кăна районти учительсем 300 ытла лекципе доклад, 2 пин ытла калаçу ирттернĕ, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем çĕр номер ытла кăларнă. Уйрăмах Карачри вăтам шкулти учительсем обществăлла ĕçе активлă хутшăнаççĕ. В. Никитин, М. Тимеске, М. Мартьянов юлташсем колхозниксене тăтăшах политикăлла докладсем туса параççĕ, вĕсем хăйсен докладĕсене колхоз умĕнче тăракан задачăсемпе тачă çыхăнтараççĕ. Колхозри обществăлла пурнăçа хутшăннипе пĕрлех, учительсем ачасене те активлă та пуçаруллă пулма воспитани параççĕ. Вĕсем вĕрентекен предметсемпе ачасем лайăх пĕлÿсем илеççĕ.

Элчĕк районта «Учитель кунне» тăтăшах ирттеретпĕр. Кунта учительсем политикăлла докладсемпе лекцисем итлеççĕ. Докладсене парти райкомĕн секретарĕсемпе ытти работникĕсем туса параççĕ.

Парти райкомĕ поручени панипе, районти сутĕç пайĕн инспекторĕ А. Федорова юлташ учительсене шкул ачисене политикăлла пĕлÿсем парасси çинчен доклад туса пачĕ. Çак ыйтăва сÿтсе явнă хыççăн, политехникăлла вĕренÿ енĕпе районти шкулсенче малтанхи утăмсем тунă. Физика, математика, хими, биологи предмечĕсене вĕрентес ĕç чылай лайăхланчĕ. Учительсем вĕренекенсене малта пыракан совет наукипе техникин çитĕнĕвĕсем çинчен калаçса ăнлантараççĕ.

Кунпа пĕрлех çакна калас пулать: шкулсене ертсе пырас тата учительсене воспитани парас тĕлĕшпе парти райкомĕн ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пур. Парти райкомĕ вăтам шкулсенчи тата çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи учительсене воспитани парас тĕлĕшпе ытларах ĕçленĕ, çав вăхăтрах пуçламăш шкулсенчи учительсене идейăлла воспитани парассине çителĕксĕр хакланă. Пуçламăш шкулсенче ĕçлекен чылай учительсем политикăлла вĕренÿре кая юлнă, вĕсем хăйсен тивĕçне те çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ.

Парти райкомĕ ку таранччен шкулсенчи пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене воспитани парас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман. Семинарсем сахал пулаççĕ, çавăнпа та хăшпĕр пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем пухусенче мĕнле ыйтусем сÿтсе явмалли çинчен те пĕлмеççĕ.

Районти шкулсен ĕçне татăкланах лайăхлатасси, вĕсене хатĕрленсе çитнĕ тата ĕçе лайăх пĕлекен кадрсемпе çирĕплетесси—парти райкомĕн задачи. Çавăнпа пĕрлех учительсен идейăлла-теориллĕ пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе те ытларах ĕçлемелле.

Н. СМИРНОВ,
КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ.

Канаш станцинче ĕçлекенсем И. В. Васильев юлташа хисеплеççĕ. Вăл станцине килнĕ вагонсен номерĕсене яланах тĕрĕс çырса илет, поездсем йĕркелес ĕçе хăвăрт тума пулăшать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. В. Васильев юлташ ĕçре.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Шахтерсен кунĕ умĕн

КУСЛАВККА, августăн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерствине пăхăнса тăракан сĕтел сурт тăвакан завод коллективĕ шахтерсен Пĕтĕм Союзри кунне палăртма хатĕрленет. Коллектив августăн 30-мĕшĕ тĕлне сакăр уйăхри плана 113 процент тултарма, планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕ накоплени тума тата 30 вагон продукци ăсатма обязательство илнĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе тата Г. М. Маленков юлташ сессире каланă сăмахпа хавхаланса, çуртсем тăвакансем хăйсен обязательствисене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ.

Шахтерсен кунĕ умĕнхи социализмла ăмăртура çуртсем тăвакан, хăма типĕтекен цехсем тата транспорт цехĕ малта пыраççĕ. Асăннă цехсен коллективĕсем, иртнĕ уйăхри çитĕнÿсене çирĕплетсе, çак кунсенче пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ.

Щитсем пухмалли конвейер çинче ĕçлекен Н. Кириллов бригади сменăри нормăна 150 процент тултарать. Комаровпа Гордеев рабочисен ĕç тухăçлăхĕ унтан та пысăкрах.

Столярнăй цех коллективĕ сакăр уйăхри программăна августăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн кĕрешсе, М. Орлов мастер смени лайăх тĕслĕх кăтартать. Сменăри рабочисем пурте хăйсен нормисене 130 процентран кая мар тултараççĕ. А. Манюков столяр август уйăхĕнчи нормăна вунă кун хушшинче тултарнă, шахтерсен кунĕччен тепĕр уйăх нормине тултарассишĕн кĕрешет.

Ытти сменăсен коллективĕсем те продукци туса кăларассине ÿстерчĕç. Г. Петров мастер сменинчи Я. Алексеев стахановец кунсерен 13-шер щит вырăнне 25-шер щит тăвать. И. Львовпа В. Петров сборщиксем те нормăран икĕ хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Куславкка поселок Совечĕн депутачĕ çамрăк стахановка Нина Белова юлташ шахтерсен кунне икĕ уйăх нормине тултарнипе паллă тума хатĕрленет.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Суту-илĕве малалла вăйлатса пырар

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ суту-илÿ ĕçне лайăхлатма, ăна тата сарăлса пусăма сĕнмеме хушса хăварчĕ. Съезд директивисене пурнăçласа, Чăваш АССР-ĕнчи суту-илÿ тата столовăй работникĕсем пĕрремĕш çур çулхи тавар çаврăнăш планне, пĕтĕмĕшпе илсен, 100,3 процент тултарчĕç. Плана тултарнипе пĕрлех нумай суту-илÿ организацийĕсем экономикăлла ытти кăтартусене те чылай лайăхлатрĕç. Сĕнĕрен уçнă магазинсемпе лавккасене специализацилес тĕлĕшпе хăшпĕр çитĕнÿсем тунă.

Кăçалхи çур çулта магазинсемпе столовăйсенчен, пĕлтĕрхи çав вăхăтпа танлаштарсан, ĕçсыннисене таварсем нумай ытларах сутнă. Сăмахран, апш-какай 84 процент, выльăх-чĕрлĕх çăвĕ 27 процент, сахăр 42 процент, çăкăр 34 процент, тĕрлĕ кĕрпесем пĕр хут çурă нумайрах сутнă. Ĕçсыннисем кăçал пир-авăр, кĕпе-йĕм, атă-пушмак тата ытти япаласем нумай туянаççĕ. Правительство 1953 çулта сутма пулă ытларах уйăрса пачĕ, анчах ăна сутас ĕçе халлĕхе çителĕксĕр организациленĕ. Сăмах майĕн вырăнти пулă трестĕ çинчен каласа хăвармалла. Вăл суту-илÿ организацийĕсене пулă çителĕксĕр парса тăрать.

1953 çулхи иккĕмĕш çур çулта апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен фончĕсем тата лавккасемпе магазинсен шучĕ татах ÿсеççĕ. Çаксем вĕсем партипе правительство халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн ырми-канми тăрăшнине кăтартса параççĕ.

Суту-илÿ организацийĕсен хăйсен ĕçне пĕрмаях лайăхлатса пырассишĕн кĕрешмелле. Çапах та вĕсен ĕçĕнче çак таранччен пысăк çитменлĕхсем пур.

Суту-илÿ организацийĕсем потребительсен ыйтăвĕсене кирлĕ пек шута илмеççĕ. Çавна пула час-часах таварсем çителĕклĕ илсе килеймеççĕ, вĕсен ассортименчĕ пĕчĕккĕ пулать. Правительство çăкăр пĕçерме çăнăх çителĕклĕ таранах уйăрса парать. Апла пулин те, хăшпĕр хуласенче, çав шутрах Шупашкарта та, уйрăм вăхăтсенче халăх ыйтнă чухлĕ çăкăр пĕçерсе кăлараймаççĕ. Ку çитменлĕх, чи малтан, çăкăр завочĕсемпе пекарньăсем çителĕксĕрринчен килет. Çакă вăл Шупашкарта, Канашра, Куславккара, Етĕрнере, Сĕнтĕрвăрринче тата Çĕрпÿре уйрăмах сисĕнет.

«Росглавхлеб» трестне тата Чăвашпотребсоюза çăкăр пĕçермелли предприятисен шутне ÿстерме хушнă. Анчах вĕсем ку ĕç çине çиелтен пăхаççĕ, ответлăха туймаççĕ. Пекарньăсем çителĕклĕ пулас пулсан, халĕ çăкăр кăна мар, тĕрлĕ булкăсем те питĕ нумай пĕçерсе кăларма май пур.

Çăкăр сутас ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнишĕн лавккасемпе магазин работникĕсен айăпĕ те пысăк. Пĕçернĕ çăкăра вĕсем хăшпĕр чухне вăхăтра илсе каймаççĕ юриех йĕркесĕрлĕх туса хураççĕ.

Хулари суту-илÿ организацийĕсен çитменлĕхĕ тата çакă пулать: вĕсем ĕçсыннисене ир çитĕнекен пахча çимĕçсем сахал сутаççĕ.

Халĕ пахча çимĕç тата ир çитĕнекен çĕрулми хатĕрлес ĕç массăллăн пуçланчĕ. Суту-илÿ организацийĕсен тивĕçĕ вĕсене хуласем валли çителĕклĕ кÿрсе килесси, вĕсене тăтăшах сутса тăрасси пулать.

Промышленность таварĕсем хушшинче вырăнти тата кооперации промышленноçĕ туса кăларакан кулен кирлĕ таварсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çав промышленноçăн 1953 çулта республикăри суту-илÿ организацийĕсене тĕрлĕ таварсем 46 миллион та 537 пин тенкĕлĕх тăратмалла. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çак плана пĕтĕмпе 26,2 процент çеç тултарнă. Вырăнти тата кооперации промышленноçĕ туса кăларакан таварсен пахалăхĕ лайăхланать пулин те, ĕçсыннисен паянхи ыйтăвне пурнĕрех тивĕçтерейместь-ха.

Вырăнти тата кооперации промышленноçĕ продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн çителĕксĕр кĕрешет, çавăнпа та нумай япаласен хакĕ государство хакĕнчен чылай пысăкрах пулать. Суту-илÿ организацийĕсен вырăнти тата кооперации промышленносне паха таварсем тăратма çирĕпрех хистемелле. Вырăнти тата топливо промышленность министерствин, промкооперации управленийĕн тата апат-çимĕçпе çăмăл промышленность министерствин туса кăларакан таварсен пахалăхне тĕпрен лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Промкооперации таварсене ваккăн сутмалли çур çулхи плана тултарайманнине пысăк çитменлĕх тесе шутламалла.

Тавар ресурсĕсене ÿстерес шутпа сутту-илÿ организацийĕсем сывăх вăхăтрах сыснасем самăртмалли пунктсем уçма тивĕç. Ку тĕлĕшпе правительство сутту-илÿ организацийĕсене пысăк льгота парать. Сысна самăртас ĕçе лайăх организациленĕ руководительсене премисем памалла тунă. Сысна самăртас ĕçе сывăх уйăхрах икĕ виçĕ хут ÿстермелле.

Кăçал столовăйсене апш-какай, çу таварăшĕсем çителĕклĕ парса тăраççĕ. Анчах столовăйсем хăйсен ĕçне лайăхлатса çитермен-ха. Вĕсем тĕрлĕ апатсем çителĕклĕ таран пĕçермеççĕ. Апат пахалăхĕ пирки те çавнах каламалла. Çак çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле.

Столовăйсенче тата магазинсенче совет сутту-илĕвĕн йĕркисене, санитари правилисене хытă пăсаççĕ. Хăшпĕр предприятисен руководителĕсем ĕçсыннисен жалобисемпе сĕнĕвĕсене шута илмеççĕ.

Социализмла пурлăха сыхласа усрасси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

Ĕçсыннисемпе яланах çыхăну тытса тăрас, вĕсен ыйтăвĕсене шута илсе пырас тесен, вăхăтран вăхăта тавар илекенсен конференцийĕсене ирттермелле. Вĕсенче критикăпа самокритикăна сармалла.

Халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенчи пекех, сутту-илÿ ĕçне те кадрсем татса параççĕ. Пирĕн республикăра сутту-илÿпе кулинари вĕренĕвĕн шкулĕ ĕçлет, анчах вăл кирлĕ чухлĕ кадрсем вĕрентсе кăлараймасть. Малашне кунта вĕренекенсен хисепне ÿстермелле, вĕренÿ пахалăхне лайăхлатмалла.

Совет çыннисем мĕн ыйтнине тĕплĕн шута илесси—сутту-илÿ работникĕсен тивĕçĕ. Ĕçри культурăна лайăхлатассишĕн пĕрмай тăрăшмалла, совет сутту-илĕвĕн халăх ыйтăвне тивĕçтерсе пымалла.

А. МАЛЫШЕВ.

Паянхи шухăш-кăмăл

(Заводри калаçусем)

Çак кунсенче заводри клубра, общежитисенче е цехсенче—рабочисем пулакан пур çĕрте те — СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă Законсене, сессире Совет правительствин пуçлăхĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмаха хĕрÿллĕн сÿтсе яваççĕ.

Вуншар пропагандистсемпе агитаторсем рабочисене сесси материалĕсемпе Г. М. Маленков юлташ сăмахĕ çинчен докладсемпе лекцисем туса параççĕ, калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем Сесси материалĕсемпе тата Г. М. Маленков юлташ сăмахĕпе хавхаланса, производствăра ÿсĕмсем тăвас тĕлĕшпе çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстереççĕ, продукци пахалăхне лайăхлатса пыраççĕ, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн кĕрешеççĕ.

Пĕрремĕш изоляционнăй цех. Кунти рабочисем сесси материалĕсене тата Г. М. Маленков юлташ сăмахне радио тăрăх итленĕ, хаçатсенче те вуланă. Халĕ вĕсем Г. М. Маленков юлташ сăмахĕ çинчен Царев пропагандист ирттерекен калаçăва итлеме йышлăн пухăннă.

Пропагандист, калаçăва вĕçлесе, Г. М. Маленков юлташ сăмахĕсене вуласа парать: «Пирĕн халăх хуçалăхĕ шанчăклăн малалла çĕкленсе пырать. Рабочисен, колхозниксен, интеллигенция хăватлă активлăхĕпе пуçарулăхĕ пирĕн вăйсен çăлкуçĕ пулса тăраççĕ. Пирĕн хамăрăн умра тăракан тĕп задачăна пурнăçлама—халăхăн пĕрмай ÿссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшпех тивĕçтерме питĕ пысăк майсем пур. Эпир çак задачăсене пурнăçлас ĕçре кĕске срокрах пысăк ÿсĕмсем тума пултарассине çирĕппĕн шанса тăратпăр!».

— Питĕ савăнтаракан сăмахсем!—тет цехри Афанасьева мастер.—Халăх пурнăçне хăйăхлатас тĕлĕшпе партипе правительство пысăк ĕçсем тума палăртрĕç. Çав ĕçсем ăнăçлă пурнăçланасса эпир пурте лайăх шанса тăратпăр. Пирĕн тăван Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пынипе пĕрлех ĕç пахалăхне лайăхлатса пыма хушаççĕ. Эпир çакна яланах асра тытса ĕçлĕпĕр. Пирĕн продукци йÿнĕ те хитре пултăр. Усă куракансем уя çине савăнса пăхчăр. Цех тата завод чысне яланах сÿнтерме тытăçăр.

Çамрăк рабочи Горбунов юлташ Отечественнăй вăрçăра аманса тавраннă хыççăн завода ĕçлеме килнĕ. Вăл Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, халăх ырлăхĕшĕн хаярран çапăçнă кунсене аса илет. Вăрçăра паттăррăн çапăçнăшăн ăна Совет правительстви орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Паттăр çамрăк тыла таврăннăранпа паян кунччен пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшса ĕçлет. Халĕ вăл—заводри паллă прессовщиксенчен пĕри. Горбунов юлташ кашни кунхи тата кашни уйăхри задание икĕ хут ирттерсе тултарать.

— Калама çук савăнăçлă кунсенче пурăнатпăр эпир,—тет вăл. — Маленков юлташăн сăмахне итленĕ хыççăн вăй-халăм мĕн тери çĕкленнине каласа та параймăп. Эпир, рабочисем, партипе правительствăна пирĕншĕн ырми-канми тăрăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр, Тăван çĕршыв вăй-хăватне ÿстерессишĕн пĕтĕм вăйран кĕрешме пулатпăр. Эпĕ, юлташсем, сире çакна çирĕп шантарса калатăп: малашне кулленхи ĕç нормине 250 процентран ытла тултарса пырăп.

Цехри старши мастер Лазарь Григорьевич Свердлов юлташ пропагандистпа тухса калакансен сăмахне тимлĕн итлерĕ. Вăл 1929 çултанпа çак заводра ĕçлет. Унăн арăмĕ те кунтах заводрах, ĕçлет. Мая ятлă хĕрĕ Мускавра, институтра, 5-мĕш курсра вĕренет, Володя, 7-мĕш класра вĕренет.

Лазарь Григорьевич заводра обществăлла-политикăлла ĕççенĕ активлăн хутшăнать, çамрăк рабочисене малта пыракан опытпа паллаштарать. Вăл ĕçлекен цехри сменăсем пурте пĕр тикĕс ĕçлесе пыраймаççĕ-ха. Свердлов юлташ заводри «Стахановец» хаçатăн иртнĕ номерĕнче «Мĕн пур сменăсене лайăх ĕçлеттермелле» ятлă статья çырса кăларнă.

— Пăхатăп та—эпĕ ĕçлеме пуçланăранпа пирĕн Тăван çĕршыв мĕн тери малалла кайнинчен тĕлĕнсех каятăп. Малалла кайнăçемĕн—пирĕн пурнăç лайăхланса пырать. Продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн, унăн пахалăхне лайăхлатассишĕн ырми-канми кĕрешĕпĕр. Çакă вăл—пирĕн çирĕп сăмах.

Цехри рабочисем пысăк ÿсĕмсем тăваççĕ. Зачищица Романовская юлташ иртнĕ уйăхри задание 290 процент тултарнă. Стахановка ку уйăхра тата тăрăшарах ĕçлет. Зачищица Ермолаева юлташ июльри плана 254 процент тултарнă.

Пĕрремĕш сборочнăй цех. Кунта рабочисем курăнмаççĕ—апата кайнă пулас. Корпусăн пĕр енче, станоксем патĕнче, пилĕк хĕрача вырнасса ларнă. Вĕсем, типтерлĕ те таса тумланнăскерсем, пĕрпĕрне хире хирĕç ларнă. Пĕрин аллинче—хаçат. Вĕсем ку вăхăтра вулама чарăннă пулнă, пĕр-пĕрне хăйсен шухăшĕсене каласа параççĕ.

Пропагандиста курсан хĕрсем тата хаюллăрах калаçма пуçларĕç.

— Сире хаçат вуласа пама хушнă пулĕ ĕнтĕ? Хăшĕ-ха сирĕн агитаторĕ?

— Çук, пире никам та хушман. Хушасса кĕтсе лармалла-и çакăн пек чухне!—терĕ А. Зотова юлташ.

— Комсомолкăсем эпир, калибровщицăсем. Пирĕн хамăрăн кăна мар, ытти çамрăксене те тĕрĕс ăнлантарса пама пĕлмелле. Акă, малтанлăха хамăр пухăнтăмăр та—пĕрле сÿтсе яватпăр,—хушса хучĕ Е. Чечнева юлташ.

Заводри рабочисем сесси материалĕсене çине тăрса, унти кашни сăмаха ăнланса вĕренеççĕ. Акă, виççĕмĕш сборочнăй цехри пĕр отделенинчи старши мастер Холык, рабочи Шмелев тата ытти юлташсем сесси çинчен калаçу пуçарса ячĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕсене вырăнти пурнăçпа тачă çыхăнтарса калаççĕ. Г. М. Маленков сăмахĕсенче—пирĕн пĕтĕм халăх шухăшĕ, тет Шмелев юлташ.

* * *

Завод коллективĕ ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ÿстерес тĕлĕшпе куллен кун çĕнĕ çитĕнÿсем туса пырать. Малтанхи тапхăрта пулнă пысăк çитменлĕх—пĕр тикĕс ĕçлеменни—пĕтсе пырать. Халĕ ĕнтĕ цехсенчен нумайăшĕ талăкри графика çирĕп тытса пыраççĕ.

Завод ССР Союзĕн Электростанцисемпе электропромышленность министерствин заводĕсен ăмăртăвĕнче тавату мĕш хут ĕнтĕ умлăн-хыçлăн мала тухрĕ. Коллектив СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессине пысăк ÿсĕмсем тунипе кĕтсе илчĕ.

Заводри рабочисем август уйăхĕнче производство планне 106 процент тултарассишĕн, брак тăвассине иртнĕ уйăхринчен 10 процент чакарассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чылай йÿнетессишĕн кĕрешеççĕ.

Н. НИКИТИН.
Шупашкарти электроаппаратура завочĕ.

Колхозри рационализатор

ЕЛЧĔК. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал вăйлă тырпул çитĕнтерчĕ. Халĕ колхозра хĕрсех авăн çапаççĕ. Колхозри электромонтер А. Столяров юлташ ултă лашапа ĕçлемелли молотилкăпа ытларах усă курмалли май тупрĕ тата улăм купаламалли хатĕр турĕ.

Халиччен лашапа ĕçлекен молотилка тырра сăварса тасатман. А. Столяров юлташ молотилка çумне тырă сăварса тасатакан вентилятор хушса хунă. Халĕ çак молотилка кирек мĕнле тырра та сăварса тасатать. Çапла тума молотилка ураписене 70 сантиметр çÿлĕш хăпартнă.

Улăм купаламалли хатĕре тимĕртен электросваркăпа çыпăçтарса тунă. Ку хатĕрĕн хăпартмалли тата антармалли механизм пур. Ăна икĕ айккинчи кустăрмасем урлă лентăсем хурса тунă. Çав лентăсем çумне кашни 40 сантиметртан планкăсем çапса тухнă. Планкăсем улăма 7—8 метр çÿлĕш илсе хăпартма пултараççĕ. Çак паха ĕçе ытти колхозсенчи колхозниксем те пырса курчĕç. А. Столяров комсомолецăн паха ĕçне ырларĕç.

В. ПОРТНОВ,
«Ворошиловец» стена хаçат редакторĕ.

Фермăсене механизациллеççĕ

МУРКАШ. «Аврора» колхоз иртнĕ çулта гидротаран лартнăччĕ, кăçал вара автопоилкăсем туянна, вĕсене ĕне витине вырнаçтарса лартнă. Халĕ ĕнтĕ гидротаран выльăх-чĕрлĕх фермисене кирлĕ чухлĕ шыв парса тăрать, кашни ĕне кирек хăш вăхăтра те тăраниччĕнех шыв ĕçме пултарать.

Выльăх-чĕрлĕх фермисене механизацилес тĕлĕшпе районти ытти колхозсем те пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. «Сталинец», «Свобода» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсем гидротаран лартаççĕ. Энгельс ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан колхозсем хытă апатсене пăспа çемçетсе, çĕрулмипе тымарçимĕçе пĕçерсе хатĕрлес ĕçсене механизацилеççĕ.

М. ОСИПОВ.

Строительство ĕçĕсене хăвăртлатар

Совет правительстви пурăнмалли çуртсем лартма тата культурăпа йăла строительстви валли çултан-çул укçа-тенкĕ ытларах та ытларах парса тăрать.

Тĕслĕхрен, Чăваш АССР коммунальнăй хуçалăх министерстви енĕпе кăна пурăнмалли çуртсем лартма, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут ытларах, коммунальнăй тата культурăпа йăла строительстви валли икĕ хут ытларах укçатенкĕ уйăрса панă.

Çапах та çав укçа-тенкĕпе усă курасси кăçал питĕ çителĕксĕр пулса пырать. Уйрăмах коммунальнăй предприятисем лартасси юлса пынине палăртмалла. Вĕсене лартмалли çулталăклăх плана пĕрремĕш çурçуллăхра мĕн пурĕ те 8,8 процент кăна тултарнă.

Çав вăхăтрах коммунальнăй строительство енĕпе вăхăта вăраха тăсмасăр, васкавлă тумалли ĕçсем нумай. Сăмахран, Шупашкар хулинче электричество линийĕсене юсаса лайăхлатас ĕçех илер. Электричество линийĕсене лайăхлатма кирлине халăх питĕ туйса тăрать. Шкулсенче те электричество çутти çителĕксĕр-ха.

Çак çитменлĕхсене шута илсе, правительство столицăра электричество линийĕсене юсама е çĕнĕрен карма 700 пин тенкĕ укçа уйăрса пачĕ. Апла пулин те, пĕрремĕш çурçуллăхра плана ним чухлĕ те тултарман, июль уйăхĕнче тин кăштах ĕçе тытăннă ятне тунă.

Водосвет директорĕ Благодадских юлташ ĕçсем япăх пынине проводсемпе крючоксем çук тесе тÿрре кăларасшăн. Çапла тейĕпĕр, анчах Благодадских юлташ çав кирлĕ япаласене туянма мĕншĕн-ха васкамасть?

Шупашкарта водопровод тăвас тĕлĕшпе те ĕçсем тÿсме çук юлса пыраççĕ.

Чылай объектсене техникăлла документаци халĕ те парса çитермен. Сăмахран, Улатăр хулинче электричество линийĕсем тумалли проектлă заданисене иртнĕ çулхи август уйăхĕнчех туса пĕтернĕ, анчах стройкăн техникăлла проект ку таранах çитсе те çук. Çав çитменлĕхе пула тĕп строительствăна тытăнман-ха.

Çакăн пек çитменлĕхсем татах та нумай. Проектпа смета документацийĕ çук пирки, Канаш хулинче вуникĕ хваттерлĕ çурт тата Шупашкарти мунча валли шыв ăшăтма хурансем лартмалли вырăн халĕ те тума тытăнман.

Чăваш АССР коммунальнăй хуçалăх министерствин проект тăвакан «Чувашпроект» ятлă организаци пур. Çак организаци асăннă строительство ĕçĕсен проектне нумайран та 20 кун хушшинче туса пĕтерме пултарнă. Анчах та, тивĕçлипе тĕрĕслекен пулман пирки, проекта июль уйăхĕн пуçламăшĕнче тин тума тытăннă.

Республикăри хуласенчи чылай урамсенче тротуарсем çукки, урамсене чул сарманни, çырмасем урлă кĕперсем хывманни укçа-тенкĕ çитменнинчен мар, уйăрса панă укçапа кирлĕ пек усă курма пĕлменнинчен килеççĕ. Республикăри хуласене илемлетме укçа-тенкĕ уйăрса парас ĕçе, августăн 1-мĕшĕ тĕлне илсен, йĕркелесе çитереймен-ха. Акă мĕншĕн: çирĕплетнĕ техникăллă документсем çук пирких!

Строительство ĕçĕсем юлса пынишĕн «Чувашпроект» кăна мар, организацисем хăйсем те айăплă. Сăмахран, Шупашкарти мунчара хурансем лартмалли вырăна проект тума февралĕн 28-мĕшĕнче тин заказ панă, çав вăхăтрах ку строительство валли укçа-тенкĕ иртнĕ çултах панă пулнă.

Канашра 12 хваттерлĕ пурăнмалли çурт лартас тĕлĕшпе те ĕçсем çавнашкалах пулса пынă. Ку çурт проектне тума мартăн 28-мĕшĕнче тин заказ панă, госсанинспекци вара çурт лартмалли вырăн пирки «Чувашпроекта» июнĕн 5-мĕшĕнче тин пĕлтернĕ.

Вырăнти Советсем те строительство ĕçĕсене хăвăртлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмаççĕ. Сăмахран, Сосновка поселокĕнче пушар деповĕн çуртне пиллĕкмĕш çул тăваççĕ ĕнтĕ. Ку строительство пирки Шупашкар хула Совечĕ те, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ те решенисем сахал мар йышăннă. Анчах ĕç малалла каймасть. Строительство ĕçĕсене туса пĕтерме Шупашкар хула Совечĕн коммунальнăй хуçалăх пайĕн ремонтпа строительство кантурне (начальникĕ М. Самохин юлташ) хушнă. Ку кантур кăçал нимĕн те туман-ха. Хула Совечĕн исполкомĕ вара кун пирки мерăсем йышăнмасть.

Çÿлте асăннă фактсем акă мĕн çинчен калаççĕ: пурăнмалли çуртсем тумалли планпа коммунальнăй строительство планĕ, тĕпрен илсен, Чăваш АССР коммунальнăй хуçалăх министерствин айăпĕпе тулса пыраймаççĕ. Вырăнсенчи Советсен исполкомĕсем те ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ-ха.

В. ДАНИЛОВ,
Чăваш АССР-ĕнчи коммунальнăй банк управляющийĕн заместителĕ, финанс службин советникĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Сĕрпÿ районĕнчи «Правда», «Авангард», «Родина» колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисем юсас тата çĕнĕ витесем тăвас енĕпе çителĕксĕр ĕçлени, асăннă колхозсен правленийĕсемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕçа хаклананни çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине çыру килнĕччĕ. Редакци çак çырăва ĕçсыннин депутачĕсен Сĕрпÿ район Совет исполкомĕн ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленине янăччĕ.

Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ çырура пур çитменлĕхсене те тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ. Çырăва «Правда», «Авангард», «Родина» колхозсен правленийĕсен ларăвĕсенче активпа тата выльăх-чĕрлĕх фермисенчи работникĕсемпе пĕрле сÿтсе явнă. Çавăн хыççăн асăннă колхозсен правленийĕсем çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă, строительство бригадисем организациленĕ.

Колхозсенчи строительство ĕçĕсене правительство кăтартнă вăхăтра пурнăçлама ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ тивĕçлĕ мерăсем йышăннă.

Вăрлăхлăх акнă нумай çул ÿсекен курăксене лайăх пухса кĕртер

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе туса ирттерекан агротехникăлла ĕçсем хушшинче нумай çул ÿсекен курăксем акса ÿстерни пысăк вырăн йышăнать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе йышăннă директивăсенче çапла каланă: «Сĕрĕçĕ татах та тухăçлăрах, квалификациллĕрех пулмалла, унта курăк акса тăвасси вăйлă аталанмалла, тĕрĕс пусă çаврăнăшĕ пулмалла, техникăлла культурăсем, выльăх апачĕ, пахча çимĕç тата çĕрулми лартакан çĕр лаптăкĕ чылай ÿсмелле».

КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, пирĕн республикăри малта пыракан колхозсем курăк тата выльăх апачĕ тумалли культурăсем акмалли пусă çаврăнăшне ăнăçлăн йĕркелесе пыраççĕ. Нумай çул ÿсекен курăксем акмалли лаптăк ÿссе пырать, çапла майпа сĕрĕçĕн культурине малалла ÿстермелли никĕс лайăхланать. Çапах та халиччен тунă çитĕнÿсем социализмла ялхуçалăхĕн куллен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултараймаççĕ. Нумай çул ÿсекен курăксем акса тăвас ĕçе ытларах вăйлатмалла. Курăксем акассине вăйлатни тăпра пахалăхне хăвăртрах лайăхлатма, тырпул тухăçлăхне ÿстерме, выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлемелли çирĕп никĕс туса хума май парать.

Нумай çул ÿсекен курăксем акса ÿстерес ĕçре агротехникăна çирĕп пăхăнни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Агротехника правилисене пурне те пурнăçласси кашни колхозшăн çирĕп йĕрке пулса тăмалла.

Курăк акса тумалли пусă çаврăнăшне хăвăртрах йĕркелесе çитерес тесен, клевер, люцерна, тимофеевка, овсяница вăрлăхĕсене ытларах хатĕрлени кирлĕ. Ку тĕлĕшпе агротехникăлла ĕçсен пĕтĕм комплексне пурнăçлас пулать.

Республикăри малта пыракан колхозсем (Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец», Комсомольски районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан т. ыт. колхозсем), агротехникăлла ĕçсене тивĕçлипе пурнăçласа, нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕсене нумай туса илеççĕ, çапла майпа сĕрĕçĕн культурине ÿстерсе пыраççĕ.

Нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕсене туса илес тĕлĕшпе Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз пысăк опыт пухнă. Ку колхозра çултан-çул пысăк тухăçлă люцернăпа тимофеевка вăрлăхĕсем туса илеççĕ.

Çапла, 1951 çулта 85 гектар лаптăк çинче кашни гектартан люцернăпа тимофеевка вăрлăхĕсене 3,5-шер центнер туса илнĕ. Тимофеевка вăрлăхне 60 гектар лаптăк çинчен кашни гектартан 3,95-шер центнер, люцерна вăрлăхĕсене 25 гектар лаптăк çинчен кашни гектартан 2,25-шер центнер туса илнĕ. Уйрăм бригадăсенче тухăçлăх унтан та ытларах пулнă.

1952 çулта, çанталăк условийĕсем лайăхах пулман пулин те, 25 гектар лаптăк çинче кашни гектартан 2,33-шер центнер тимофеевка вăрлăхĕ тата 1,2-шер центнер люцерна вăрлăхĕ туса илнĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1948 çултанпа нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕсене хăйне валли çителĕклĕ туса илет, государствăна та чылай парать. Çакă вăл колхоза пысăк усă парать. 1948 çулта колхоз государствăна курăк вăрлăхĕсем панăшăн 100 пин тенкĕ укçа, 40 тонна тĕштырă, 1951 çулта—245 пин тенкĕ укçа, 170 тонна тĕштырă, 1952 çулта—125 пин тенкĕ укçа, 85 тонна тĕштырă илнĕ.

Пысăк тухăçлă вăрлăх туса илес ĕçĕн ăнăçлăхне курăксене вăхăтра пухса кĕртни татса парать. Нумай çул ÿсекен курăксене кая юлса пухса кĕртни пысăк çухатусем патне илсе пырать, ун пек чухне вăрлăх 70—80 процента çити уя тăкăнса юлма пултарать. Çавна асра тытса, вăрлăхлăх курăксене вăхăтра пухса кĕртме тăрăшмалла. Вăрлăхлăх хăварнă курăксене кĕркунне е хĕлле тин çапса шĕкĕлчеме питĕ йывăр, мĕншĕн тесен вĕсем нÿрĕк нумай сăрхăнтарса илеççĕ.

Курăксене пухса кĕртнĕ хыççăнах, вĕсене мĕнле те пулин сăлтавпа вăхăтра çапса шĕкĕлчеме май килмест пулсан, итем çине кÿрсе капан туса лартмалла, капанĕсене улăмпа лайăх витсе хумалла. Çакна капана çумăр ан кайтăр тесе тăваççĕ.

Вăрлăхлăх акнă курăксене вăхăтра пухса кĕртсе çийĕнчех çапса шĕкĕлчени вĕсенчен пысăк тухăçлăх илме май парать. Çак ĕçсене кая хăварсан, тухăçлăх чакать, кашни гектартан вăрлăх 40—50 килограмран ытла туса илме те май килмест. Çак çитменлĕх курăксем акса тăвас ĕçе те, пĕтĕм ялхуçалăхне те пысăк сиен кÿрет.

Вăрлăхлăх курăксене пухса кĕртмелли вăхăта тĕрĕс палăртса хурас пулать. Пирĕн республикăри колхозсем люцернăна унăн пуçĕсем 75—80 проценчĕ хăмăрлансан (ун чухне люцерна пуçĕсене туниччен çăмăллăнах уйăрса илме пулать), клевера унăн пуçĕсен 75—90 проценчĕ хăмăрлансан пухса кĕртме тытăнаççĕ. Çавăнпа та вăрăсем пулнине хытă асăрхаса тăмалла.

Вăрлăхлăх курăксене комбайнпа пухса кĕртни уйрăмах пысăк усă парать. Комбайнпа ĕçлесен курăксене вăхăтра пухса кĕртме, тăкаксене пĕтерме пулать. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра курăксене пухса кĕртнĕ çĕрте комбайнпа ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Комбайнпа вырнă чухне курăксене кĕлтене çыхма, вĕсене типĕтме, капана хывма кирлĕ мар. Комбайнпа вырни тăкаксене палăрмаллах чакарать.

Вăрнар, Елчĕк, Улатăр районĕсенче нумай çул ÿсекен курăксене комбайнпа пухса кĕртни лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Вĕсен паха опычĕпе республикăри кашни машина-трактор станцийĕн усă курни кирлĕ.

Курăксене лашапа ĕçлемелли машинăсемпе пухса кĕртнĕ чухне вĕсене кĕлтене çыхас пулать. Çапла тумасан, вăрлăх питĕ нумай хире тăкăнса юлма пултарать. Апла пулин те, нумай колхозсенче вăрлăхлăх курăксене вырнă чухне кĕлте çыхмаççĕ. Çак çитменлĕх кăçал пулмалла мар. Тăкаксем ан пулччăр тесе, кĕлте çыхнă вырăна шăналăксем е брезентсем сармалла.

Кĕлтесене типĕтме сарса хураççĕ. Шăрăх çанталăкра вĕсем 5—6 кун хушшинчех типсе çитеççĕ, ун хыççăн вĕсене тÿрех çапса вăррине шĕкĕлчес пулать.

Нумай çул ÿсекен курăксен вăррине тракторпа тата лашапа ĕçлекен молотилкăсемпе е комбайнсемпе çапмалла. Çапнă чухне ĕç пахалăхне тăтăшах асăрхаса тăрас пулать. Нумай çул ÿсекен курăксене çапмалли чи лайăх машина МК-1100 молотилка пулать.

Вăрлăха молотилкăпа çапнă хыççăн ăна çийĕнчех шĕкĕлчесе хурас пулать. Çакна тума клеверотеркăсемпе тата молотилкăсемпе усă курмалла.

Вăрлăха çапса тасатнă хыççăн ăна кирлĕ кондицие çитермелле. Вăрлăха «Триумф», «Клейтон» сортировкăсемпе тасатмалла, тасатнă чухне кирлĕ аласем вырнаçтарса лартмалла. Ун хыççăн вара вăрлăха ятарласа тунă «Кускута» сортировкăпа тасатмалла.

Нумай çул ÿсекен курăк вăрлăхне çителĕклĕ таран туса илни тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем йĕркелеме кирлĕ. Çавăнпа та ку ĕçе кашни колхозрах тĕплĕн тата вăхăтра туса ирттермелле.

Доцент Т. КРУЖИЛИН.

Кану çуртĕнче

Кувшинкăри канмалли çуртра канакансем кимĕсемпе çÿреççĕ.

И. НИКИФОРОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Атăлăн сулахай çыранĕнчи çулпала сăрт çинелле хăпарсан, илемлĕ сăрпа сăрланă хапха курăнса кайрĕ. Хапха çине пысăк саспаллисемпе «Ырă сунса кĕтетпĕр» тесе çырса хунă. Хапхаран кĕрсенех питех те илемлĕ вырăна пырса тухатăн. Куç умне икĕ хутлă çуртсем тухса тăраççĕ. Кунта, хыр вăрманĕ варринче, Кувшинкăри кану çурчĕ вырнаçнă. Кану çурчĕ 1932 çултанпа ĕçлеме пуçланă. Çак вăхăтранпа унта вунишар пин çын канса хăйсен сывлăхне тĕреклетнĕ.

— Мĕн тери ырă хыр вăрманĕнче! — тет савăнса Ишлей районĕнчи Чаканар ялĕнчи инвалидсен артелĕнче ĕçлекен С. Седов юлташ.—Сывлăш мар—эмел!

Степан Яковлевич Аслă Отечественнăй вăрçăра нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнă. Унăн кăкăрне «Мухтав», «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденсем, «Ленинграда хÿтĕленĕшĕн» медаль илемлетеççĕ.

Степан Петрович Петров 30 çул ытла ĕнтĕ Сĕрпÿ районĕнчи Громов ячĕпе тăракан промысла артелĕнче ĕçлет. Чăпта çапнă çĕрте Петров ĕç нормине яланах ирттерсе тултарать. Çакăншăн ăна кану çуртне кайма путевка панă.

— Тата лайăхрах ĕçлеме сăмах паратăп, канма пур условисене те туса панăшăн партие правительствăна чун-чĕререн тав тăватăп,—тет Степан Петрович.

Хаваслăн шавласа клубран çамрăксем тухрĕç.

— Хĕрсем, каччăсем, атьăр кимĕпе ярăнма! — сĕнчĕ пĕри. Ку сĕнĕве пурте хапăл туса йышăнчĕç.

Канмалли çуртăн 10 кимĕ пур. Кÿлĕ юмахри пек илемлĕ вырăнта. Вăл сарлака мар, тăршшĕ вара икĕ километр ытла. Шыв йĕри-тавра вăрман ÿсет. Тăрна куçĕ пек тăрă шывра йывăç мĕлкисем курăнаççĕ. Кÿлĕре шыв яланах тулли тăрать. Нумай вырăнта тапса тăракан çăлкуçсем кÿлĕри шыва чакма памаççĕ.

Кувшинкăра Чăваш, Тутар, Мордва, Мари АССР-ĕсенчен тата ытти çĕртен килнĕ çынсем те канаççĕ.

Кану çуртĕнче культурăлла-массăлла ĕçе те аван йĕркеленĕ. Канма килнисем Шупашкара экскурсие кайса килнĕ.

— 9 сехетре кану çуртĕнчи эстрадăра тĕлпулу касĕ пулать!—пĕлтерчĕç радиоузел урлă.

Ваттисем те, çамрăксем те васкаса эстрада патне пухăнчĕç. Çак кун вĕсем пирĕн мухтавлă землякпа—Совет Союзĕн Геройĕпе подполковник Федот Никитич Орлов юлташпа тĕл пулчĕç. Леонид Агаков писатель Орлов пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен кĕскен каласа пачĕ.

Орлов юлташ хăй мĕн çамрăкранпах летчик пулма ĕмĕтленни, совет авиацийĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра тата вăрçă хыççăн тĕлĕнмелле ĕçсем туни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Мухтавлă земляка нумай ыйтусем пачĕç. Орлов юлташ вĕсем çине тĕплĕн ответлерĕ.

Ĕлĕкхи вăхăтра чăваш хĕрарăмĕ кану çуртĕнче пуласси çинчен шухăшлама та пултарайман, вăл кану çурчĕсем пурри çинчен те пĕлмен.

Красноармейски районĕнчи Вутлан ялĕнчен килнĕ В. Андреева юлташа илер. Вăл 17 çул хушши чăпта çапнă çĕрте ĕçлет. Андреева ĕç нормине кашни уйăхра ирттерсе тултарни çинчен савăнса пĕлтерчĕ. Унăн ĕçлес хастарлăхĕ нихçанхинчен пысăк.

Кунта Шупашкар районĕнчен Шуркка ялĕнчен килнĕ 70 çултан иртнĕ Агапия Захаровна Захарова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Социализм» артельтен килнĕ 72 çулхи Александра Максимовна Максимова юлташсем канаççĕ.

— Эпĕ артельре 17 çул хушши техничка пулса ĕçлетĕп. Ĕлĕкхи вăхăтра техничкăна çын вырăнне шутланă-и? Халĕ мана, ватă карчăка, хисеплесе канма ячĕç. Питех те аван канатăп. Кунне тăватă хут тутлă апат çитереççĕ, выртса тăма çемçе вырăн пачĕç. Чун савăнать,—терĕ хĕпĕртесе Максимова юлташ.

Кăçал Кувшинкăра 1.350 çын канмалла, кашни сменăра 150-шар çын канать.

А. ЖИРНОВ.

Колхоз театрĕ Шупашкара куçрĕ

Республикăри куçса çÿрекен колхоз театрĕ Сĕнтĕр районĕнчи Кадикасси ялĕнчен Шупашкара Чапаевски поселока куçрĕ.

Театр коллективĕ Л. Агаковпа Л. Родионов çырнă «Ылтăн вăчăра» постановкăна поселокри клубра тата пир-авăр комбиначĕн, лента тĕртекен фабрикăн, Атăл леш енчи торфопредприятин клубĕсенче кăтартрĕ.

Куракансем колхоз театрĕн малтанхи спектаклĕне кăмăлласа кĕтсе илчĕç.

Театр малашне республикăри колхозсене тухса çÿренисĕр пуçне, хулари заводсемпе предприятисенче спектакльсем кăтартма тытăнать.

В. МИХАЙЛОВ.

Хаçатсем çинчен вулакансем мĕн калаççĕ

Редакци авторсемпе ĕçлемест

Канаш районĕнчи «Коммунизмшăн» хаçат юлашки вăхăтра хăйĕн пахалăхне чылай лайăхлатрĕ. Хаçата алла тытсан, вулакансемĕн вулас килет.

Кашни номерте тенĕ пекех «Тăван çĕршыв тăрăх» тата «Хамăр район тăрăх» пайсенче чылай материалсем пичетленеççĕ. Юлашки уйăхсенче хаçатра «Наука çитĕнĕвĕсене — ялхуçалăхне» ятлă темăпа малта пыракансен опычĕпе паллаштаракан материалсем тăтăшах пичетлеме пуçларĕç.

Хаçатра халăх демократи çĕршывĕсен çитĕнĕвĕсене çутатакан статьясем те час-часах пичетленеççĕ. Çавăн пекех партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене вĕренме пулăшакан статьясене час-часах курма пулать.

Калас пулать, хаçатăн çитменлĕхсем те чылай. Чи пысăк çитменлĕх вăл—партипе совет, профсоюзпа комсомол активĕ, ялхуçалăх специалисчĕсем хаçатран аякра тăни. Çав асăннă работниксен статьисем хаçатăн кăçалхи номерĕсенче ытла та сахал.

Районти ял Совечĕсем организациллемассăлла ĕçе вăйлатса пыма социализмла обязательствăсем илчĕç. Ку майпа хаçат «Ял Совечĕсем 1953 çул валли илнĕ социализмла обязательствăсене чыслăн пурнăçлар» ятлă умстатья пичетленĕ. Унтăнпа вăхăт чылай иртрĕ ĕнтĕ. Анчах хаçатра совет строительстви çинчен çырнă статьясем урăх пулмарĕç. Районти финанс пайĕн заведующийĕсĕр пуçне пĕр депутат та, пĕр яланхи комисси председателĕ те, пĕр ял Совет председателĕ те хаçат ĕçне хутшăнмасть.

Иккĕмĕш кварталти финанс планне Канаш районĕ ăнăçлă тултарса, республикăра иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Янкăльч ял Совечĕ плана 245 процент тултарса районта чи мала тухрĕ. Ку ял Совечĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçре мĕнле майпа пысăк çитĕнÿ туни çинчен хаçатра çырман.

Комсомол тата профсоюз работникĕсем хаçата ытла та сахал хутшăнаççĕ. ВЛКСМ обкомĕн бюровĕ июлĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче комсомолецсемпе çамрăксем выльăх апачĕ хатĕрлемелли вунăкунлăх ирттерчĕ. Вунăкунлăх иртсе кайрĕ. Анчах ВЛКСМ райкомĕнче ĕçлекенсем те, колхозсенчи пуçламăш организацисен секретарĕсем те çав вунăкунлăх пирки хаçат урлă тухса каламарĕç.

Хаçата медицина, культура работникĕсем, учительсем хутшăнмаппа пĕрех. Кăçал тухнă номерсенче пĕр клуб заведующийĕпе икĕ учитель çырнă пĕрер статья çеç пур. Пуçламăш парторганизаци секретарĕсем те хаçат урлă хăйсен ĕç опычĕпе паллаштармаççĕ.

Районта предприятисемпе учрежденисем сахал мар. Анчах хаçат вĕсен ĕçĕ çинчен хутран-ситрен кăна çыркалать.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне сарас енĕпе те хаçат çителĕклĕ ĕçлемест-ха. Пĕртен-пĕр Е. Шестакова агроном çырнă «Выльăхсене çитермелли купăста—силослăх паха культура» ятлă статья çеç пур. Ыттисем вара урăх хаçатсенчен илнĕ статьясем кăна.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерсе пыракансем Канаш районĕнче сахал мар. Сăмахран, кăçалхи ултă уйăх хушшинче кашни сăвакан ĕнерен «Соревнование» колхозри Е. Доброва доярка 972 литр, Куйбышев ячĕпе тăракан колхозри М. Иванова 924 литр, Киров ячĕпе тăракан колхозри Т. Матвеева доярка 789 литр сĕт суса илнĕ. Хаçат вĕсен паха опычĕ çинчен çутатса паман-ха.

Хаçата çавнашкалах колхоз председателĕсем, уй-хир бригадирĕсем питĕ сахал çыраççĕ.

Çаксем пурте хаçат редакцийĕ авторсен активĕпе çителĕксĕр ĕçленинчен килеççĕ.

Критикăпа самокритика та хаçатра сахал-ха. Районти организацисемпе учрежденисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене уçса палăртни, унти работниксене çивĕччĕн критиклени çук-ха.

И. КУЗЬМИН.

Манăçа юлнă фельетонсем

1952 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Сăнтерÿ çулĕ» хаçатра «Валя—ырă кăмăллă» ятлă фельетон пичетленсе тухрĕ. Унта Турханти зооветучасткри фельдшер помощникĕ В. Крышкина хăйĕн ĕçне питех те сÿрĕккĕн туса пыни çинчен çырнă. Анчах районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ Крышкина пирки нимĕнле мера та йышăнман, главнăй ветврач Важоров юлташ зооветучасткри çитменлĕхсене пĕтерес вырăнне Крышкинăна хăйĕн хÿттине илнĕ.

Кăçалхи апрелĕн 5-мĕшĕнче «Важоров хÿттинче» ятлă тепĕр фельетон пичетленсе тухрĕ. Унта: «Валя—ырă кăмăллă» фельетон пичетленни тăватă уйăх ытла иртрĕ, фельетонри фактсем те манăçа юлчĕç», тесе çырнă.

Иккĕмĕш фельетонĕ пичетленсе тухнăранпа та тăватă уйăх иртрĕ. Анчах фельетонра кăтартнă ĕçсем пирки район руководителĕсем нимĕнле мера та йышăнмаççĕ. Вĕсем районти хаçатра пичетленнĕ критикăлла материалсене пăхса пымаççĕ.

Районти хаçат редакцийĕн материалсен витĕмлĕхĕшĕн çине тăрса кĕрешмелле, унсăрăн вĕсен хакĕ нумай чакать. Çакăншăн вулакансем те кÿренеççĕ.

М. ТАРАСОВ.

Ача çурчĕсенче ĕçлекенсен курсĕсемпе семинарĕсем

Пирĕн республикăри ача çурчĕсенче 250 çын ытла воспитательсем, педагогсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсен квалификацине ÿстерес тата вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатас шутпа юлашки вăхăтра чылай ĕçсем туса ирттереççĕ.

Иртнĕ уйăхра Чкаловскинче ача çурчĕсенче ĕçлекенсен республикăри пĕррремĕш конференцине пухнă. Унта Чăваш АССР Сутĕç министрĕ А. Токарев юлташ иртнă вĕренÿ çулĕн итогĕсем çинчен доклад туса панă. Ачасен санаторилле çурчĕн директорĕ Воронцов юлташ, Буинскинчи ача çурчĕн директорĕ Клементьев юлташ, Çĕрпÿри тата Кÿкеçри ача çурчĕсенче ĕçлекен воспительницăсем Морковкинăпа Якушева юлташсем хăйсен ĕç опычĕпе паллаштарнă.

Çак кунсенче республикăри ача çурчĕсен директорĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатасси, çĕнĕ вĕренÿ çулĕнчи задачăсем çинчен докладсем итленĕ.

Халĕ Шупашкарта ача çурчĕсенчи воспитательсен квалификацине ÿстермелли пĕр уйăхлăх курс ĕçлет. Унта педагогика, санитари тата ытти ыйтусемпе те лекцисем пулаççĕ. Лекцисем вулас ĕçе республикăри паллă учительсене, врачсене, пионер работникĕсене хутшăнтарнă.

Çак кунсенче Йĕпреçре ача çурчĕсенче ĕçлекенсен республикăри иккĕмĕш конференцине ирттереççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансем

Ĕнесенчен сĕт ытларах суса илер

Вăрнар районĕнчи колхозсем кăçал фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх шутне, унăн тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. 1952 çулхи ултă уйăх хушшинче кашни ĕнерен вăтам шутпа 350 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçал 529 литр илнĕ.

Малта пыракан колхозсен фермисенче ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ хăвăрт ÿссе пырать, çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсенче пĕчĕкха. Сталин ячĕпе тăракан колхозра кăçал ултă уйăхра кашни ĕнерен 1.136 литр, Жданов ячĕпе тăракан колхозра 711 литр сĕт суса илнĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозра вара кашни ĕнерен 282 литр, Каганович ячĕпе тăракан колхозра 248 литр кăна сĕт суса илнĕ.

Районти Сталин ячĕпе тăракан колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илессипе чапа тухнă. Çак юлашки икĕ çул хушшинче вăл обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те пысăк ÿсĕмсем турĕ. Акă ĕне фермине илер. Фермăра майракаллă шултра выльăхсем 518 пуç шутланаççĕ, вăл шутран сăвакан ĕнесем 200. Кунта ĕнесен сĕт тухăçлăхне чылай ÿстернĕ. 1951 çулта кашни ĕнерен 1.350 литр сĕт суса илнĕ пулсан, 1952 çулта—1.759 литр илнĕ. Колхозăн сысна, сурăх, кайăк-кĕшĕк фермисем те пысăк тухăç пураççĕ. 1953 çулшăн государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене колхоз чыслăн пурнăçланă.

Колхозăн витесем пурте стандартлă. Пысăк та илемлĕ ĕне витине иртнĕ çул кирпĕчрен тунă. Витесемпе юнашарах кормоцех çурчĕ ларать. Кунта пĕтĕм ĕçсене механизациленĕ. Электромоторсем улăм туракан, тымарçимĕçсене çăвакан тата вĕтетекен, тĕштырăсене авăртакан машинăсене ĕçлеттереççĕ. Кормоцехăн пĕр пысăк пÿлĕмĕнче кормозапарниксем вырнаçтарса лартнă.

Халĕ выльăх-чĕрлĕх хуçалăхĕнче пысăк строительство пырать. Колхозри строительсем кирпĕчрен 100 ĕнэ вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса пĕтереççĕ. Унта ĕнесем тăмалли вырăнсене тăватă ретлĕ тунă. Çавăнтах 180 тонна силос хывмалăх икĕ башня тăваççĕ. Колхозра 1.925 гектар çĕр лаптăкĕ çинче вунă уйлă икĕ пусă çаврăнăшĕ, тăхăр уйлă пĕр пусă çаврăнăшĕ тата 156 гектар çинче выльăх апачĕ акса тумалли 8 уйлă пусă çаврăнăшĕ тунă. Çак пусă çаврăнăшĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ, пĕтĕм çĕрĕç культурине лайăхлатса пырса, çулсеренех вăйлă тырпул, çĕрулми, выльăх кăшманĕ, силос культурисем тата нумай çул ÿсекен курăксем туса илеççĕ. 1952 çулта колхозăн нумай çул ÿсекен курăксен çулмалли лаптăкĕ 240 гектар пулнă, кашни гектартан 60 центнер ытла пысăк пахалăхлă утă туса илнĕ. Кăçал нумай çул ÿсекен курăксем 260 гектар çинчен пухса кĕртнĕ.

Ĕнесен сĕт тухăçлăхне хăпартас ĕçре уйрăмах сĕтеклĕ апатсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Колхозра кашни гектартан çĕрулми 200 центнер, тымарçимĕçсем — 500 центнер, силос культурисем 100 центнертан кая мар туса илеççĕ.

Кăçалхи çул колхозра выльăхсем валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлес тĕлĕшпе татах та пысăк ĕçсем тунă. Уй-хирте 250 гектар çĕрулми лартнă, вăл шутран 200 гектартне сĕрме пуссине вырнаçтарнă. Çакă вăл тĕштырăсем акнă çĕр лаптăкне чакармасăрах нихçанхинчен те нумай çĕрулми хатĕрлеме май парать.

Хĕллехи вăхăтра фермăра кашни ĕнене, унăн чĕрĕ виçине, сĕт мĕн чухлĕ панине шута илсе, кашни кунах вăтам шутпа 20—25 килограмм тымарçимĕç, 15—20 килограмм силос, 2—3 килограмм концентрат тата кирлĕ таран минераллă апатсем параççĕ.

Çуллахи вăхăтра ĕнесене лагерьте усраççĕ. Вĕсене унта виçĕ кĕтĕве уйăрнă, кашнине уйрăм участоксенче кĕтеççĕ. Выльăхсем çÿрекен вырăнсенче курăк вăйлă пулсан та, ĕнесене симĕс курăк çулса çитереççĕ тата концентратлă апатсем параççĕ.

Колхоз ферминче ĕçлекен дояркăсем хăйсен ĕçне юратса, пĕлсе тăваççĕ. Вĕсем фермăра пĕр улшăнмасăр нумайшар çул ĕçлеççĕ. Дояркăсем кашни ĕнен йăлине, кăмăлне тата уйрăмлăхне кура тăрантараççĕ. Вĕсем çамрăк ĕнесене пăрулама лайăх хатĕрлеççĕ, вĕсен тухăçлăхне ÿстерессишĕн куллен тăрăшаççĕ. К. Ситухина доярккăн «Писанка» ятлă ĕне тăваттăмĕш пăру амăшĕ пулнă. Вăл кашни кунах 17 литр таран сĕт парать. Вăл пăхакан «Вера», «Лиса» ĕнесем кунне 15-шер литр сĕт параççĕ. Н. Бурлакова доярккăн «Жданка» ятлă ĕни кунне 18 литр, «Нарядка»—16 литр, «Волна»—1[illegible] литр сĕт параççĕ.

Ĕçчен дояркăсем ĕнесене талăкра 3—4 хутчен сăваççĕ. Сăвас умĕн тата сунă хыççăн ĕне сиккине массаж тăваççĕ.

Ĕçе тăрăшса, юратса тунипе, дояркăсем пысăк çитĕнÿсем тăваççĕ. Кăçалхи ултă уйăх хушшинче Н. Бурлакова доярка хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 1.392 литр, К. Ситухина—1.286 литр сĕт суса илнĕ.

Ферма заведующийĕ Социализмла Ĕç Геройĕ А. Доманин юлташ хăйĕн ĕçне кăтартуллăн туса пырать. Вăл сĕт суса илмелли çулталăкри задание дояркăсем мĕнле пурнăçланине пĕрмаях тĕрĕслесе тăрать. Ферма работникĕсем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. Дояркăсем хушшинчи ăмăрту итогĕсене кашни уйăхрах производствăлла канашлусенче сÿтсе яваççĕ.

Фермăра çамрăк пăрусене зоотехника науки хушнă пек пăхса çитĕнтереççĕ. Çавăнпа та вĕсем пурте сывă та маттур ÿсеççĕ.

Районти ытти хăшпĕр колхозсенче те выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес, унăн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе паха çитĕнÿсем тăваççĕ. Жданов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ икĕ çул каярах ĕне ферминчен пысăк тупăш илеймен. 1951 çулта кунта кашни ĕнерен 702 литр сĕт суса илнĕ пулсан, 1952 çулта—1.119 литр, кăçалхи çур çулта 736 литр суса илме пултарнă. Фермăри паллă доярка М. Порфирьева хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 1.135 литр сĕт суса илнĕ.

Жданов ячĕпе тăракан колхозра ĕнесен сĕт тухăçлăхне ÿстерессине пысăк тухăçлă выльăх кăшманĕ туса илес тата силос нумай хатĕрлес ĕçрен пуçланă. Пĕлтĕр кунта кашни гектартан 482 центнер выльăх кăшманĕ туса илнĕ, кашни ĕне валли 3 тонна ытла силос хатĕрленĕ. Хĕллехи вăхăтра ĕнесене кашни кун 15—20 килограмм выльăх кăшманĕ, 10—15 килограмм силос панă. Çуркунне те ĕнесем пĕр татти-сыпписĕр сĕтеклĕ апат, утă тата концентрат çинĕ. Выльăхсене кĕтĕве кăларсан, ĕнесене ятарласа уйăрнă уйăхра çÿретнĕ, выльăх кăшманĕ, симĕс курăк çулса парса, хушса тăрантарнă. Чи малтанах клевер, унтан викăпа сĕлĕ хутăштарса акнă курăка çулса панă. Кунсăр пуçне кашни ĕнене талăкра 1,5—2 килограмм концентрат (шултра авăртнă сĕлĕ тата турантă) çитереççĕ. Çавăнпа та кунта ĕнесенчен нумайăшĕ талăкра 12—15 литр таран сĕт параççĕ.

Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем халĕ выльăх-чĕрлĕх валли тĕрлĕ йышши апатсем кирлĕ чухлĕ хатĕрлеççĕ. 340 тонна силос хывса çулталăкри плана тултарнă. 345 гектар акнă курăксемпе çаран утти пухса кĕртнĕ.

Шверник ячĕпе тăракан колхоз та ĕнесене пăхса усрас тата тăрантарас ĕçе тĕпренех лайăхлатрĕ. Ĕнесене кунта ытларах çĕрулми, выльăх кăшманĕ, силос, турантă, посыпка пама пуçланă, фермăра ĕçлекенсене улăштарма пăрахнă, вĕсем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса янă, вĕсен политикăлла ăнланулăхне ÿстерсе пынă. Тăрăшнин результачĕсем куç умĕнчех. Иртнĕ ултă уйăх хушшинче кашни ĕнерен 624 литр сĕт суса илнĕ. Пĕлтĕр çулталăкра та кашни ĕнерен 487 литр кăна сĕт суса илнĕ пулнă.

Малта пыракан фермăсенче ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ хăвăрт ÿссе пыни районти пур колхозсенче те выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăçлăха ÿстерме пысăк резервсем пурри çинчен калать.

Мĕншĕн-ха Калинин ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре районта кая юлса пырать? Унăн акнă курăксемсĕр пуçне улăх-çарансемпе кĕтÿ çÿретмелли вырăнсем çĕршер гектар шутланаççĕ. Анчах та кунта вĕсен тухăçлăхне ÿстерме тăрăшмаççĕ. Кăçал кашни гектартан улăх утти 10 центнер, акнă курăксен утти 11,8 центнер çеç туса илнĕ. Выльăх кăшманне çумкурăксем пусса илнĕ. Çĕрулми пĕлтĕр гектартан 50 центнер кăна тухнă. Выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе колхозра тăрăшман пирки, артель иртнĕ хĕлле выльăхсене лайăх утăпа, сĕтеклĕ апатпа тăрантарса усраймарĕ. Ахальтен мар иртнĕ çулта кунта кашни ĕнерен 752 литр, кăçалхи ултă уйăх хушшинче 359 литр анчах сĕт суса илнĕ.

Районти 20 колхозран 15 артельте ĕнесенчен сĕт суса илнин шайĕ районăн вăтам кăтартăвĕнчен пĕчĕккĕ. Çакă вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе кашни колхозăн уйрăмлăхне шута илсе конкретлăн ертсе пымаллине кăтартать.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан колхозсен опытне сарни питĕ кирлĕ. Пуçламăш парторганизацисен фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе çÿлти пусăма лартмалла, вĕсем хушшинче пыракан социализмла ăмăртăва конкретлăн ертсе пымалла.

Ку тĕлĕшпе Хрущев ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци пуян опыт пухнă. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче партгруппа тунă, коммунистсене, комсомолецсене чи ответлă участоксене лартнă. Ферма работникĕсем хушшинче партиллемассăлла ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Кунта агитаторсем, хаçат вулакансем ĕçлеççĕ, хĕрлĕ кĕтес организациленĕ, стена хаçачĕ кăлараççĕ, ăмăрту итогĕсене тĕрĕслесе тăраççĕ. Парторганизаци çирĕп план тăрăх выльăх-чĕрлĕх работникĕсен вечерĕсене ирттерет. Çаксем Хрущев ячĕпе тăракан колхозри выльăх-чĕрлĕх работникĕсене ĕçре паха çитĕнÿсем туса пыма нумай пулăшаççĕ.

Районти нумай колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисенче партилле-массăлла ĕçе тивĕçлипе организацилемен.

Вăрнар районĕ обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе республикăра малта пыракан район пулма пултарать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе куллен ертсе пыни тата малта пыракан колхозсен опытне анлăн сарни çеç кирлĕ.

С. ФЕДОТОВ.

Тĕнчери лару-тăру

ИТАЛИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВО КРИЗИСĔ

Италире правительство кризисĕ виççĕмĕш эрне пырать ĕнтĕ. Çак кризис çĕршыври политикăлла вăйсем хушшинче пулса тăнă пысăк улшăнусене палăртса тăрать. Вăл «Атлантика» политикинчен, де Гаспери правительстви тытса пынă политикăран тухса тăнă. Христианла демократсен партийĕ Америка майлă тытса пыракан çул-йĕр мĕн патне илсе çитерни пурне те паллă.

Чăннипе илсен, Америка çарĕсем оккупациленĕ çитерĕ Итали политикăпа экономика тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех Америкăна пăхăнса тăрать. Унăн экономики вăйсăрланса пырать, халăхăн анлă массисем ытларах та ытларах чухăнланаççĕ. Итали экономикинче США монополийĕ тарăнрах та тарăнрах тымар ярать. Америка «пулăшнипе» Италире 1948 çулта 864 предприяти, 1949 çулта—1.208, 1950 çулта—1.783, 1951 çулта 2.725 предприяти хупăннă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра пĕтĕмпех ĕççĕр тăрса юлнă рабочисем 2.192 пин çын, эрнере пурĕ те темиçе кун хушши кăна ĕçлесе тăракансем 4 миллион çын шутланаççĕ.

Океан леш енчи монополисем «ырлăх кÿрекен» Хĕвеланăç Европăра Итали пек чухăн пурăнакан çĕршыв сахал тупăнать пулĕ. Çакна май акă мĕне аса илни вырăнлă: нумаях пулмасть Италири хаçатсенче парламент комиссийĕн докладне пичетлесе кăларнă. Ятарласа уйăрнă çак комисси çĕршыври халăхăн экономикăлла пурнăçне нумай вăхăт хушши сăнаса вĕреннĕ. Комисси тĕрĕслесе пăхни акă мĕн кăтартнă: 324.000 çемье хваттер çук пирки нÿхрепсемпе шăтăксенче пурăнать, 1.357 пин çемье питĕ «чухăн» пурăнать. Çавăн чухлĕ çемьене яхăнах «чухăн» пурăнаççĕ, юлашкинчен 7.617 пин çемье, комисси çемçен каланă тăрăх, «чăтмалла» пурăнаççĕ. Докладра кăтартнă тăрăх, 869.000 çемьере нихçан та аш-какай тата сахăр тытмалламаççĕ, миллион ытла çемьере çав апат-çимĕçсемпе сайра хутра кăна усă кураççĕ.

Çакна шута илсен, Итали халăхĕн пысăк пайĕ христианла демократсен лидерĕ де Гаспери правительстви тытса пыракан тулашри тата шалти политикăна июль уйăхĕнче пулса иртнĕ парламент суйлавĕнче мĕншĕн сивлени паллă пулса тăрать. Пурте пĕлеççĕ, çав суйлавра Италири реакци пысăк поражени тÿснĕ. Влаçра тăракан христианла демократсен партийĕ суйлава либералсен, республиканецсен тата социал-демократсен партийĕсемпе пĕр блок туса тухнă. Вăл, унчченхи суйлаврипе танлаштарсан, виçĕ миллиона яхăн сасă çухатнă. Çакăнпа пĕрлех парламент суйлавĕ сулахай партисем ÿссе пынине уççăн кăтартса панă. Вĕсем суйлавра, 1948 çулхипе танлаштарсан, 1.426.000 сасă ытларах илнĕ. Вĕсен çĕршыври влиянийĕ ÿснĕ. Вĕсемшĕн суйлавçăсенчен 35 проценчĕ ытла сасăланă. Коммунистсен партийĕ депутатсен палатинче 143 мандат (1948 çулта 131 мандат пулнă), социалистсен партийĕ 75 мандат илнĕ (унчченхи суйлавра 52 мандат кăна пулнă).

Çапла ĕнтĕ, суйлав хыççăн çĕршыври вăйсем хушшинче улшăнусем пулнă. Çакă вăл прогрессивлă лагерь чылай вăйланнине кăтартать. Апла пулсан та, де Гаспери çакна шута илесшĕн пулман. Вăрттăн тĕрлĕ йышши усал ĕçсем туса иртерсе, христианла-демократсен клерикалла партийĕн членĕсенчен кăна правительство туса хунă. Çĕнĕ правительствăн программи çинчен каласа, де Гаспери парламентра: эпĕ «пĕр хускалмасăр» юлатăп, тесе пĕлтернĕ. Урăхла каласан, вăл халăх ирĕкне пăхмасăр хăйĕн халичченхи политикăлла çул-йĕрне малашне те тытса пыма шутланă.

Анчах де Гаспери, «Атлантика политикишĕн» хыпса çунакан çак этем, питех те кирлĕ пĕр ĕçе шута илмен. Халиччен парламентри ытларахăш влаçра тăракан реакциллĕ ушкăнсем каланине итлекен хĕспăшал пулса тăнă пулсан, халĕ, суйлав хыççăн, унта çĕршыври халăхсен анлă массисем çине таянса тăракан демократиллĕ вăйсен позицийĕ вăйланнă. Де Гаспери тытса пыракан политикăлла программа путланса ларасси çавăнтан килнĕ те ĕнтĕ.

Çакă та паллă факт пулса тăрать: «центр» текен вак буржуалла партисен—социал-демократсен, либералсен тата республиканецсен депутачĕсем, халиччен христианла демократсен союзникĕсем пулса тăнăскерсем, халĕ иртнĕ суйлавăн урокĕсене шута илнĕ. Çавăн пирки те вĕсен де Гаспери сĕннĕ программăна хирĕç тăмалла пулнă. Депутатсен палатинче ытларахăш сасă илеймен пирки июлĕн 28-мĕшĕнче де Гаспери кабинечĕн отставкăна тухмалла пулнă. Ют çĕршывсенчи хаçатсем çырнă тăрăх, Италири депутатсен палати хăйне килĕшмен правительствăна çакăн пек сирпĕнтерсе антарни иртнĕ 30 çул хушшинче пирвайхи хут пулнă.

Капитализмла çĕршывсенчи демократиллĕ общественность де Гаспери правительстви отставкăна тухнине пĕтĕм Атлантика блокне хыттăн пырса çапни вырăнне хурса хаклать. Çакăн хыççăн де Гаспери правительстви сирпĕнсе анни çинчен пĕлтерни мĕншĕн «Америкăри пуç пулса тăракан ушкăнсене тарăхтарса çитернине» ăнласа илме пулать ĕнтĕ.

Политикăлла партисен пуçлăхĕсемпе нумай вăхăт хушши консультацисем иртерне хыççăн, Итали республикин президенчĕ Эйнауди августăн 2-мĕшĕнче христианла демократа Аттилио Пиччоние çĕнĕ правительство туса хума сĕннĕ. Анчах та Пиччони правительство программи туса хурас тата çĕнĕ кабинетра министрсен вырăнĕсене партисем хушшинче валеçес тĕлĕшпе тĕрлĕрен буржуалла партисен пуçлăхĕсемпе тĕл пулса нумай кунсем хушши канашлусем иртерни ăнăçлă пулман.

Италире тухса тăракан хаçатсенче Пиччони туса хунă правительство йышĕ çинчен пĕлтернисем акă мĕн кăтартаççĕ: вăл халиччен хи клерикалла кабинета тепĕр хут ура çине тăратма хатĕрленнĕ. Çак кабинетра де Гаспериe ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартмалла пулнă. «Сăмах кивĕ режима унăн пĕтĕм кивĕ ăшчиккипе пĕрле, унăн пĕтĕм реакциллĕ политикипе пĕрле тата халăх массисене шапса тăманнипе пĕрле чĕртсе тăратасси çинчен пынă»,—тесе çырать «Аванти» хаçат.

Иртнĕ суйлав урокĕсене асра тытса, сылтăм социал-демократсем Пиччони правительствине хутĕлеме килĕшмен. Çакна вĕсем: пулас правительство списокне «çĕнĕ кабинетран чăтса тăмалла мар кабинет туса хуракан çынсем» кĕнĕ, тесе ăнлантарса панă.

Парламент умĕнче намăса тухасран хăраса, августăн 12-мĕшĕнче Пиччони президента правительство туса хума килĕшменни çинчен пĕлтернĕ. Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, правительство туса хума официальнăй йĕркепе бюджет министрĕ пулнă Пеллана полномочи панă.

Италире правительство кризисĕ тарăнланса пырать. Депутатсен палатипе сенат председателĕсем, çавăн пекех тата тĕрлĕ партисен парламентри ушкăнĕсен пуçлăхĕсем çырусем, телеграммăсем, резолюцисем нумай илсе тăраççĕ. Вĕсенче демократиллĕ правительство, нациллe килĕшÿпе мир правительстви туса хума ыйтса çыраççĕ. Моден хулинчи металлургсем хăйсен пухăвĕнче йышăннă резолюцире фашизма хирĕç пыракан демократиллĕ, республикăлла правительство туса хума кирли çинчен çыраççĕ. Çак правительствăн шалти тата тулашри лару-тăрăва çăмăллатас политика тытса пымалла, пысăк реформăсем иртермелле, ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтермелле. Феррар провинцийĕнчи граждансем республика президенчĕ патне çыру янă. Унта вĕсем президента «мирпе наци пĕрлĕхĕн правительстви туса хурас ĕçре халăх ыйтнине палăртса тăма, политикăлла деятельсене суйлав результачĕсене шута хума кирли çинчен кăтартса пама» чĕнеççĕ.

Правительство кризисĕ кирек мĕнле вĕçленес пулсан та çакă паллă: Итали халăхĕн анлă массисем Америка «пулăшăвĕ» тенĕскер Италие пусмăрласа çитернине ытларах та ытларах ăнласа илеççĕ, вĕсем хăйсен ирĕклĕ те никама пăхăнман çĕршывĕшĕн вĕçне çитиччен кĕрешме хатĕр тăраççĕ.

ФРАНЦИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

Францире пулса иртекен ĕçсем пĕтĕм тĕнчери общественноçа интереслентереççĕ. Парижра тата çĕршыври ытти нумай хуласенче забастовка хăватлăн сарăлса пырать. Ланьель правительстви ĕççыннисен материальнăй пурнăçне малалла начарлатакан чрезвычайнăй декретсем кăларнине хирĕç пуçланнă забастовкăсене 4 миллион ытла рабочисемпе служащисем хутшăннă.

Забастовка çакăн пек хăватлăн вăйланса пыни Францири ертсе пыракан ушкăнсене аптратса, сехĕрлентерсе ÿкернĕ. Кунта çакна палăртса хăварни кирлĕ: çак кĕрешÿре тĕрлĕ профсоюз организацийĕсене—Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацине, «Форс уврие» профсоюзне, католикла тата автономиллĕ профсоюзсене кĕрекен ĕççыннисем пĕр-пĕринпе тачăн пĕрлешнĕ. Францири хаçатсем çеç мар, Америкăра тухса тăракан хаçатсем те забастовкăсем пĕрлĕхлĕ, пысăк вăйпа, организованно иртнине палăртаççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат, сăмахран, çапла çырать: Францире 1936 çултанпа, халăх фрончĕ пулса тăнă вăхăтранпа, пирвайхи хут забастовкăна государство служащийĕсен мĕнпур категорийĕсем хутшăннă.

Çĕршывра пулса иртекен ĕçсем çинчен, çавăн пекех тата правительствăн чрезвычайнăй декречĕсем çинчен тĕплĕн çырса, «Либерасьон» хаçат çапла калать: «Çак декретсем вĕсем нихçан та пурнăçа кĕмен ĕçсем çинчен сăмах панине ĕненме пăрахнă халăх массисем хушшинче хирĕçÿ кăлармалли хĕлхем кăна пулса тăнă».

Çĕршыв финанс енĕпе пысăк йывăрлăхсем тÿссе иртерет. Укçа хакĕ—франк хакĕ вĕçĕмсĕр йÿнелсе пырать. Унăн таварсем илмелли пултарулăхĕ 1952 çулта, 1940 çултипе танлаштарсан, 42 процент чухлĕ кăна пулнă. Ваккăн сутмалли тавар хакĕсем 1947 çултан пуçласа 1950 çула çитиччен 2,4 хута яхăн ÿснĕ. Хальхи вăхăтра хут укçасем нихçанхинчен те нумайтарах—икĕ пин миллиард франк чухлĕ. Ку вăл 1938 çулта пулнинчен 20 хут нумайрах пулать. Бюджетри дефицита (тăкаксем тупăшран ытларах пулнине) илес пулсан, вăл 700 миллиард франк чухлĕ шутланать. Кун чухлĕ пысăк дефицит нихçан та пулман. 1954 çул, финанс министрĕ Фор каланă тăрăх, тата та сехĕрленмелле çул пулать. Америка хĕспăшалланма паракан «пулăшăва» шута илес пулсан та дефицит 870 миллиард франка çитет.

Франци экономикинчи йывăрлăх çар расхочĕсем пысăк пулнипе тата ытларах пысăкланса пырать. Çар расхочĕсем бюджетра 42 процент йышăнаççĕ. Вьетнамри вăрçă валли, сăмахран, кашни çул 600 миллиард франк укçа тухать. Кун çумне тата агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе хĕспăшалланма укçа-тенкĕ нумай пĕтермелле пулнине хушас пулать.

Çĕршывра промышленность производстви тăтăш чакса пырать. Çăмăл промышленность предприятийĕсем кăна мар, çавăн пекех тата йывăр индустри предприятийĕсем те хăйсен ĕçĕсене чакараççĕ. Производство чакнă май ĕççĕрлĕх ÿсет.

Франци экономики пысăк йывăрлăх тÿссе иртерни хулари тата ялти ĕççыннисен пурнăçне начарлатать.

Ланьель правительстви халăх массисен пурнăçне тата ытларах начарлатса пынипе экономикăпа финанс кризисĕнчен тухма хăтланать. Çĕршыври «финанспа экономикăна сыватас тĕллевпе» Ланьель кăларакан чрезвычайнăй декретсем шăпах та çакна шута илеççĕ те ĕнтĕ. Çак декретсем тăрăх, государство служащийĕсен тĕрлĕ категорийĕсем валли пенси илме кирлĕ çул шутне тата çичĕ çул чухлĕ ÿстерме, «хушма рабочисем» текен рабочисене 25 пин çын ĕçрен кăларма, вакантлă вырăнсене 25 процент чакарма палăртаççĕ.

Çак декретсем Францири пĕтĕм халăха хирĕçтереççĕ. Августăн 6-мĕшĕнче почта, телеграф тата телефон работникĕсен пĕтĕмĕшле забастовки пуçланнă. Кун хыççăн пĕр миллион çурă государство служащийĕсем, 400 пине яхăн чугун çул работникĕсем, газ завочĕсемпе электростанцисенче ĕçлекен рабочисем ĕçе тухман. Тепĕр кунне Луара çĕр кăмрăк бассейнĕнчи, Нор, Па-де-Кале департаменчĕсенчи горняксем забастовка тума [illegible]лă. Сыхăну работникĕсемпе, чугун çул работникĕсемпе, горняксемпе, государство служащийĕсемпе пĕрле металлургсем, металлистсем, суту-илÿ флотĕнчи ĕçлекен моряксем забастовка тăваççĕ. Çĕршывра, тĕрĕссипе илсен, пĕтĕм сыхăнупа транспорт ĕçĕ чарăнса ларнă.

Забастовка тăвакансене хирĕç правительство чрезвычайнăй мерăсем йышăннă. Хаяр репрессисене пăхмасăр Франци халăхĕ кĕрешĕве малалла вăйлатса пырать.

Коммунистсен наци пухăвĕнчи фракцийĕ парламентăн каникула салатса янă сессине халех пухма сĕнÿ панă. Сессире правительство декречĕсене пăрахăçа кăларасси çинчен тата рабочисемпе служащисен ĕç укçине ÿстерессе çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухма сĕннĕ. Çак сĕнĕве 209 депутат йышăннă. Ку вăл шăпах та парламентăн черетсĕр сессине пухма кирлĕ чухлĕ сасă пухнине пĕлтерет. Анчах та Наци пухăвĕн председателĕ Эррио çакна хирĕç пулнă. Вăл çапла каланă: парламент сессине пухас тесен, депутатсем телеграмма пани кăна çителĕклĕ мар, хăйĕн ыйтăвне кашни депутатăн хут çине çырса панипе çирĕплетмелле, тенĕ.

Францире хăватлăн сарăлса пыракан забастовка сахалтан та икĕ ĕç çинчен калать. Пĕрремĕшĕнчен, çĕршывра хальхи вăхăтра влаçра тăракан ушкăнсем тытса пыракан милитаристла «Атлантика», политикине хирĕç тăракан вăйсем ÿссе çитнĕ. Францири влаçра тăракан ушкăнсен политикине Ланьель декречĕсем те лайăх кăтартса параççĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, забастовкăсем, çакна кăтартаççĕ: Франци халăхĕн авангарчĕ—унăн геройла рабочи класĕ пĕрлĕхлĕ фронта пĕрлешнĕ класĕ, пысăк вăй пулса тăрать. Çак вăя буржуалла политиксем те шута илмесĕр тăма пултараймаççĕ. Çак вăй Францин нациллe интересĕсене ют çĕршыв империалисчĕсен интересне пăхăнтарма тăрăшакан реакцие татăклăн хирĕç тăма пултарать.

Н. ЗАХАРОВ.

Францири ĕççыннисем парламентăн чрезвычайнăй сессине пухма ыйтаççĕ

ПАРИЖ, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Наци пухăвĕн чрезвычайнăй сессине халех пухассишĕн тăрас шухăш вăйланса пырать. Забастовка тăвакан ĕççыннисем парламент сессине пухмалла тăвассине хăйсен тĕп ыйтăвĕсенчен пĕри пулать тесе шутлаççĕ. Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацине, ĕççыннисен христианла конфедерацине, «Форс уврие» профсоюз организацийĕсене кĕрекен профсоюз членĕсем, çавăн пекех профсоюзсенче пĕрлешсе тăман рабочисем Наци пухăвне пухма ыйтаççĕ.

«Юманите» хаçат çапла çырать: кашни кун Наци пухăвне йышлă делегацисем пырса тăраççĕ, вĕсем чрезвычайнăй сесси пухма ыйтаççĕ. Халăх кампанийĕ вăйланса пынă пирки «Форс уврие» профсоюзĕпе христианла ĕççыннисен конфедерацийĕн ертсе пыракан органĕсем Наци пухăвне сывăх вăхăтра пухма кирли çинчен решени йышăннă.

«Ĕççыннисем,—тесе çырать «Юманите» хаçат,—Наци пухăвне пухма ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем халăха хирĕçле декретсене пăрахăçа кăлармалла тăвасшăн. Вĕсем ĕç укçине пĕр виçере тытса тăмалли политикăна пĕтересшĕн, хăйсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме кирлĕ ытти майсем тупассишĕн тăраççĕ...»

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине сесси пухма ыйтса тĕрлĕ партисенче тăракан 124 депутат ыйту тăратнă. Хаçатсем çырнă тăрăх, Наци пухăвĕ августăн 21-мĕшĕнче пухăнма пултарать.

Франципе Швейцари хушшинче поездсем çÿреме чарăннă

БЕРН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухса тăракан хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Францири чугун çул работникĕсем забастовка тунă пирки Швейцарипе Франци хушшинче почта йĕркеллĕ çÿретмеççĕ тата поездсем çÿремеççĕ. Женевăпа Франци хушшинче сыхăну пĕтĕмпех чарăнса ларнă. Вокзалсене халăх тулнă. Вĕсем ниçта та тухса кайма пултарайман пирки килĕсене каялла каяççĕ. Италипе Франци урлă иртсе çÿрекен экспрессем Лозаннăпа Базель хулисенчен малалла каймаççĕ.

Швейцарири почта, телефон тата телеграф директорийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франципе сыхăну тытасси пĕтĕмпех чарăнса ларнă.

Францире 4 миллион çын ытла забастовка тăвать

ПАРИЖ, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Францири ĕççыннисен забастовки кунтан-кун вăйланса пырать. «Пари-Пресс-Энтрансижан» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, паян 4 миллион ытла рабочи тата служащи забастовка тăвать. Вăл шутра: телеграфпа телефон работникĕсем, чугун çул работникĕсем, шахтерсем, Парижри хула транспорчĕпе Францири ытти хуласенчи транспорт работникĕсем, газ промышленноçĕнчи работниксем, электриксем, металлургсем, металлистсем, суту-илÿ флотĕнче ĕçлекен моряксем, государствăпа коммунальнăй предприятисемпе учреждениесенче ĕçлекен служащисем.

Забастовка тăвакан ĕççыннисем, правительствăн ĕççыннисен интересĕсене сиен кÿрекен «чрезвычайнăй» декретсене пăрахăçа кăларма ыйтнипе пĕрлех, ĕç укçи ÿстерме ыйтаççĕ.

Ĕççыннисем правительство политикине хирĕç тăни Францири политикăлла ушкăнсене чылаях сехĕрлентерсе ÿкернĕ. Парламентăн чрезвычайнăй сессине халех пухма ыйтасси вăйланса пырать. Кунта тата çакна палăртмалла: коммунист-депутатсем кăна мар, социалистсем те, тата католиксемпе радикалсем те чылайăшĕ парламент сессине пухассишĕн тăраççĕ. Паянхи куна Наци пухăвĕн чрезвычайнăй сессине пухма ыйтса 150 депутат Наци пухăвне ыйту тăратнă.

ПАРИЖ, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Францире правительство чрезвычайнăй декретсем кăларма хатĕрленнине хирĕç забастовка çаплах малалла пырать.

Почта, телеграф тата телефон работникĕсем вуннăмĕш кун забастовка тăваççĕ. Çак ведомствăри служащисем кăларса тăратнă ыйтусемпе инженерсемпе техниксен представителĕсем те килĕшеççĕ. Малтанхи кунсенче забастовка вăйсăр сарăлнă Гар, Котде, Нор, Кальвадос департаменчĕсенче те халĕ забастовка вăйланса пырать.

Официальнăй власть представителĕсем тата буржуалла хаçатсем забастовка пирки Парижри çынсем хушшинче кăмăлсăрлăх кăларма пăхаççĕ. Çавна май, Париж хулинчи забастовка тăвакан сыхăну работникĕсем, пурĕ 15 пин çын, Париж халăхне чĕнсе калани пичетлесе кăларнă. Унта вĕсем мĕнле сăлтавсем пирки забастовка тумалла пулни çинчен ăнлантарса панă. Вĕсем правительствăна уйрăм полномочисем памалла тунине пăрахăçа кăларассишĕн, почта работникĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн кĕрешме халăха чĕнеççĕ.

Чугун çул работникĕсен, газ завочĕсемпе электростанцисенче ĕçлекен рабочисен забастовки малалла пырать. «Юманите» хаçат çырнă тăрăх, газ завочĕсемпе электростанцисенче ĕçлекенсем пурте забастовкăна хутшăннă.

Çĕршывра пур çĕрте те шахтерсен забастовки вăйланса пырать.

Иранри забастовка

ТЕГЕРАН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Шахбаз» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, августăн 13-мĕшĕнче ирхине Тегеранри табак фабрикинче ĕçлекен рабочисем ĕçлеме пăрахнă. Вĕсем хăйсен юлташĕсене тĕрмерен кăларма ыйтаççĕ. Тĕрмере ларакан рабочисем апат йышăнма пăрахнă.

Забастовка тăвакан рабочисемпе пĕр шухăшлă пулса, Тегеранри элеваторта ĕçленĕ, халĕ тĕрмере ларакан 26 рабочи, августăн 13-мĕшĕнче ирхине 10 сехетрен пуçласа апат йышăнма пăрахнă.

«Табак фабрикинче ĕçлекен рабочисем,—тесе çырать хаçат,—Иран премьер-министрĕ патне телеграмма яма тесе телеграфа кайнă пулнă. Çак вăхăт тĕлне общественлла [illegible] ăх енĕпе ĕçлекен комисси, забастовка тăвакан рабочисем тата тĕрмере ларакан рабочисен çемйисем хĕснипе, арестленĕ рабочисенчен 36 çынна ирĕке кăларма йышăннă. Тĕрмере юлнă ытти 20 рабочи çаплах апат йышăнмасть.

ТЕГЕРАН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Шаджаат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тегеранри пекарньăсенче, электростанцисенче, мунчасенче, çĕвĕ мастерскойĕсенче, элеваторсенче, глицерин заводĕнче тата ытти предприятисенче ĕçлекен рабочисем, Тегеранри табак фабрикинче ĕçлекен рабочисене арестленĕ пирки протестлесе, Тегеран прокурорĕ тата губернаторĕ патне çыру янă. «Арестленĕ рабочисене ирĕке кăлармасан, эпир коллективлă ĕçсем туса иртерĕпĕр», тенĕ вĕсем хăйсен çырăвĕнче.

ТЕГЕРАН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Шаджаат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Зираба шахтинче ĕçлекен рабочисен августăн 8-мĕшĕнче пуçланнă забастовки рабочисем çĕнтернипе вĕçленнĕ. Иранри влаçсен представителĕсем шахта начальникне вырăнтан кăларма, шахтерсене тÿлемелли парăм укçине тÿлесе татма, малашне ĕç укçине кашни уйăх пуçламăшĕнче тÿлеме тата шахтерсене забастовка тунă кунсемшĕн ĕç укçи тÿлеме килĕшнĕ.

Рабочисене профсоюз организацийĕ туса хума ирĕк панă. Иранри влаçсем çавăн пекех тата рабочисене хĕнеме пăрахма, распоряжени панă.

Кунсăр пуçне «Çĕр кăмрăк обществин» администрацине рабочисен ĕç укçи 25 процент хушса тÿлессине мĕнле те пулса хăвăртрах туса иртерме, рабочисен сурт-йĕрпе йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушнă.

Çакăнпа пĕрлех рабочисене забастовка вăхăтĕнче ĕçрен кăлармалла тунă приказсене пăрахăçа кăларнă.

ЛИ СЫН МАН СĔМСĔРЛЕНСЕ ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин Сеулти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Ли Сын Ман çапла каланă: «Эпĕ хамăра килĕшмен пек пĕрлештернине йышăнмастăп».

Ли Сын Ман çапла каласа хăратнă: политикăлла конференци пĕрлешесси çинчен тăракан ыйтăва 90 кун хушшинче татса памасан, Кăнтăр Корея «ăна тусла çĕршывсем пулăшĕç-и е пулăшмĕç-и, пурпĕрех кĕрешме пăрахмасть».

Ли Сын Ман çак конференцие Цейлон утравĕ çинче иртересси те килĕшме пултарайманни çинчен каланă, Цейлон вăл «коммунистсене майлă тăракан» Инди çĕршывне сывăх тăрать, тенĕ.

Ли Сын Ман çавăн пекех тата: «Пире Англи кÿрентерчĕ, эпĕ хамăрăн правительствăран акăлчансене шута хумалла мар тума ыйтрăм», тенĕ.

Перемири çинчен тунă килĕшĕве пăсни

ПЕКИН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет: августăн 12-мĕшĕнче перемири тĕлĕшпе ĕçлекен çар комиссийĕн секретарĕсен ларăвĕнче Корейăпа Китай енĕ тепĕр енне вĕсен çар самолечĕсем перемири çинчен тунă килĕшÿ условийĕсене 5 хутчен пăсни çинчен тата тепĕр енĕн çар çыннисем демаркаци линийĕ урлă каçни çинчен асăрхаттарнă. Çак ĕçсем пурте августăн 7-мĕшĕнче тата 8-мĕшĕнче пулнă. Корейăпа Китай енĕн представителĕ тепĕр енне малашне перемири çинчен тунă килĕшĕве пăсма парас мар тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма каланă.

ИРАНРА ХАЛĂХРАН ЫЙТСА ПĔЛНИ

ТЕГЕРАН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Тегеранри радио шалти ĕçсен министерстви пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: августăн 12-мĕшĕнче 20 сехет тĕлне 2 миллион та 25 пин çын меджлиса салатса ярассишĕн сасăланă. Ку шута меджлиса салатса ярассишĕн Тегеранра тата унăн сывăхĕнчи вырăнсенче панă сасăсем кĕмеççĕ.

Вырăс драма театрĕ Чусовой хулине кайнă

Пирĕн республикăри вырăс драма театрĕн коллективĕ Молотов облаçĕнчи Кизел хулине гастроле кайнăччĕ. Çак хулара тата Молотов облаçĕнчи ытти вырăнсенче театр 112 хутчен спектакль лартса панă. Спектакльсене 30 пин çын пырса курнă.

Театр коллективĕ çак кунсенче И. Тургенев çырнă «Дворянское гнездо» пьесăна лартса Кизел хулинчи гастроле вĕçлерĕ. Юлашки спектакле курма 800 çын пынă. Куракансем артистсене лайăх спектакльсем кăтартнăшăн тав тунă.

Халĕ театр коллективĕ Чусовой хулине гастроле тухса кайнă. Унта вăл август уйăхĕ вĕçлениччченех пулать.

Н. ЭЛЛЕ.

Вкладчиксен йышĕ ÿсет

ПАРАЧКАВ. Совет халăхĕн пурнăçпа культурăлла шайĕ пĕрмаях ÿссе пырать. Çакна перекет кассинчи вкладчиксен йышĕ ÿсни те аван кăтартса парать.

Районти перекет кассисем 1953 çулхи пĕрремĕш çур çулта вкладчиксем хутшăнтармалли плана 388 процент, июль уйăхĕнче çав плана 190 процент тултарнă.

Кăçалхи çичĕ уйăх хушшинче, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, перекет кассисене 893 пин тенкĕ ытларах вкладсем хывнă. Вкладчиксем 500 çын хутшăннă.

В. ТОНЫШЕВ.

Волейбол вăййипе кубок илессишĕн

Волейбол енĕпе Шупашкар хула кубокне илессишĕн пынă вăйăсем вĕçленчĕç. Кубокшăн пурĕ 11 команда кĕрешрĕ.

Финалра «Динамо» тата «Энергия» обществисен командисем вылярĕç. «Энергия» волейболисткисем 2:1 шутпа çĕнтерчĕç, арçынсен команди 0:2 шутпа выляса ячĕ.

Мала тухнă командăсене призсем тата дипломсем панă.

Я. ПРОКОПЬЕВ.

Хроника

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Саланчăк поселок Советне Хĕрлĕ Чутай районĕнчен Çĕмĕрле районне куçарас пирки РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ умĕнче ыйту хускатнăччĕ. Çак кунсенче РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ Саланчăк поселок Советне Çĕмĕрле районне куçарасси çинчен Указ кăларнă.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья:—Парти вĕренĕвĕнче çĕнĕ вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илмелле.
Тăван çĕршывра.
Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçе кĕрхи тырăсем акас, кĕрхи çĕртме тăвас тата вылăх апачĕ хатĕрлес ĕçсемпе тĕрĕс сыхăнтарса туса пымалла.
К. Толстихина.—Малта пыракан колхозра.
М. Крюков. — Пирĕн земляксем Наука дворецне тунă çĕрте.
И. Сидоркин.—Ĕççыннисен жалобисем çине тимлĕ те сисĕмлĕ пăхмалла.
Урăх çĕршывсенчен килнĕ хыпарсем.

Редактор заместителĕ **М. Н. ЯКИМОВ.**

КИНО

«РОДИНА»—августăн 16-мĕшĕнче, 10, 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Свинарка и пастух», ытти сеанссенче — «Запорожец за Дунаем». Сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

Августăн 17-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Золушка», ытти сеанссенче—«Варвары». 16 тата 20 сехетре—пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче—иккĕмĕш сери.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн оргнабор пайĕ çак пĕлтерÿре кăтартнă вырăнсенче ĕçлеме кайма рабочисем пухать:

Çĕр кăмрăк промышленность министерствин «Свердловскуглестрой» трестĕнче — Свердловск облаçĕнчи Карпинск хули, Вăрманпа хут промышленность министерствин Кемерово облаçĕнчи Яя станцийĕнче вырнаçнă трестĕнче, Молотов облаçĕнчи «Камлесосплав» трестĕнче, «Чувашлес» трестăн вăрманпромхозĕсенче, Электростанцисемпе электропромышленность министерствин Челябинск облаçĕнчи предприятийĕсемпе стройкисенче, çавăн пекех тата Куславккари суртсем тăвакан комбинатра тата «Мебельстрой» трестăн Çĕмĕрлери 32-мĕш строительствăпа монтаж управленийĕнче.

Стройкăсемпе предприятисенче ĕçлеме кайма договор тунă рабочие каялла тавăрмалла мар вăхăтлăх пулăшу 150—1.000 тенкĕ, çул çинче суточнăй 10—15 тенкĕ параççĕ, рабочие хăйне тата унăн çемйине çул укçи тÿлеттермесĕр илсе каяççĕ, рабочи валли 240 килограмм, унăн çемйинчи кашни çын валли 80 килограмм багаж илсе кайнăшăн предприяти тÿлет.

Ыйтса пĕлме тата ĕç договорĕсем тума районсенче—райисполкомсем çумĕнчи оргнабор уполномоченнăйĕсем патне, Шупашкар хулинче—Заводской урамри 34-мĕш çуртра пымалла.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн оргнабор пайĕ

Почтăпа кĕнекесем çырăнса илĕр!

Чăвашкниготоргăн «Книга—почтой» уйрăмĕ ĕççыннисене почтăпа кĕнекесем ярса парать.

Чăвашгиз пичетлесе кăларнă илемлĕ литература, политикăлла литература кĕнекисене, экономика, наука, техника, ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе çырнă тата ытти кĕнекесене те почтăпа ярса параççĕ.

«Книга—почтой» урлă кĕнекесем çырăнса илĕр!

Адрес: Чувашская АССР, гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 43, магазин Книготорга.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00474 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.